ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Июнь 10 ЮНКУН № 112 (9021)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
РЕСПУБЛИКĂРИ ХУЛАСЕМПЕ РАЙОН ЦЕНТРĔСЕНЧЕ: **К. Наманган.**—Çамрăкланнă хула (1 стр.).
КПСС Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕ (2 стр.).
М. Кузьмин.—Партипе государство дисциплинине çирĕп пăхăнса пымалла (3 стр.).
СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ: **Г. Луч.**—Малта пыракан ял Совечĕ (3 стр.).
ПАХА ÇУЛ-ЙĔРШЕН! **П. Щипцов.**—Çул çинче (3 стр.).
РЕСПУБЛИКА УЙ-ХИРĔСЕНЧЕ: **А. Иванцев.**—Вăйлă тырпулшăн (3 стр.).
М. Николаев.—Техникăлла культурăсем акмалли плана тултармалла (3 стр.).
КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ: **Ген. Пласкин.**—«Тăвата кун» (4 стр.).
Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕнче (4 стр.).
Копенгагенра совет кинофильмĕсен фестивалĕ пуçланнă (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем (4 стр.).

Тырпул пухса кĕртме вăхăтра хатĕрленмелле

Кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн пыракан кĕрешӳре ялхуçалăх ĕçченĕсем чылай пысăк çитĕнӳ турĕç. Суракине йĕркеллĕ, иртнĕ çулсенчипе танлаштарсан, агротехника тĕлĕшĕнчен лайăхрах срокsенче тата пысăк пахалăхпа иртттернĕ. Чкаловски, Комсомольски, Канаш, Красноармейски, Чурачăк районĕсенчи колхозсем суракине пуринчен ăнăçлăрах иртерчĕç.

Уй-хир ĕçĕсен пахалăхĕ те сисĕнмелĕх лайăхланчĕ, çĕрĕç культури хăпарчĕ. Курăк тата тымарçимĕç акмалли плана чылай иртерсе тултарнă. Колхозсем нумайăшĕ çурхи тырăсене кĕрхи çĕртме тунă вырăна, сортлă вăрлăхпа, машинăсемпе акнă. 20 пин гектар ытла çĕр лаптăкĕ çине çурхи тырăсене хĕреслĕ меслĕтпе акса хăварнă. Нумай колхозсенче тулла пĕрчĕллĕ удобренипе хутăштарса акнă.

Калчасене, нумай çул ӳсекен курăксене пысăк лаптăк çинче апат панă, сӳреленĕ. Çакă та тырпул тухăçне ӳстерес ĕçре пысăк вырăн йышăнать.

Çав вăхăтрах суракине иртернĕ чухне палăрнă пысăк çитменлĕхсене курмасăр тăни пысăк йăнăш туни пулĕччĕ. Пăрачкав, Улатăр, Шăмăршă районĕсем сураки ĕçĕсене ытла та вăраха тăсса пычĕç, вĕсем июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне те плана 84—95 процент таран кăна тултарнă. Республикăра йĕтĕн-кантăр акас, çĕрулми, пахча çимĕç лартас, махорка кăларса лартас ĕçсем çителĕксĕр пыраççĕ.

Колхозсемпе МТС-сенче çĕртме сухи тăвас, тислĕк кăларас ĕçсем уйрăмах çителĕксĕр пыраççĕ. Кувакино, Куславкка, Улатăр, Октябрьски тата хăшпĕр районсенчи колхозсем тислĕк кăлармалли плана июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне те 20 процент кăна тултарнă.

КПСС Чăваш обкомĕн пленумĕ республикăри партипе совет тата ялхуçалăх органĕсене сураки ĕçĕсене çак кунсенчех вĕçлесе ситерме, июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне çĕртме туса пĕтерме, тислĕк тата минераллă удобренисем кăлармалли плана пĕтĕмпех тултармалла тума хушса хăварчĕ. Пирĕн умра тăракан задача çакăн пек: МТС-семпе колхозсен техникипе тухăçлăн усă курмалла, мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерме çирĕп никĕс хывса хăвармалла.

Халĕ ĕнтĕ акса хăварнă тырпула пăхса çитĕнтерес, тырпул пухса кĕртме тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама хатĕрленес задача малти вырăна тухса тăрать. Суракине лайăх иртерме пулать, анчах акнă тырпула тĕплĕ пăхса çитĕнтермесен тата ăна пухса кĕртме вăхăтра хатĕрленмесен, тунă ĕçе те çухатма пулать. Пирĕн республикăри чылай колхозсем вăйлă тырпул туса илейĕссĕ пулсан, уйрăмах техникăлла культурăсен, пахча çимĕçпе тымарçимĕç культурисен тухăçĕ пĕчĕккĕ пулать пулсан, ку вăл, чи малтан, калчасене начар пăхса çитĕнтернинчен, тырпул пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрленменнинчен килет.

Çакна ялхуçалăх работникĕсем пурте лайăх пĕлсе тăраççĕ. Анчах чылай чухне ăна шута илмеççĕ. Çавна пула республикăри нумай колхозсенче калчасене пăхса çитĕнтерес ĕçе начар организацилеççĕ, çум çумлас, йăрансем хушшине кăпкалатас ĕçсем вăраххăн саралса пыраççĕ. Ку ĕçсенче механизмсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ. Ялхуçалăхне сиен кӳрекен хурткăпшанкăсене хирĕç тивĕçлипе кĕрешни çук. Калчасене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе уйрăмах Октябрьски, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă, Тăвай районĕсенчи колхозсем çултан-çул начар ĕçлесе тăраççĕ.

Республикăри партипе совет организацийĕсен, ялхуçалăх органĕсен калчасене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе туса иртермелли план хатĕрлемелле, ăна пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле. Техникăлла культурăсене, тымарçимĕç, çĕрулми, пахча çимĕç культурисене лайăх пăхса çитĕнтерме тăрăшмалла.

Вăрлăх участокĕсем çине уйрăмах тимлĕн пăхни кирлĕ. Колхоз правленийĕсемпе ялхуçалăх органĕсен кашни культура тăрăх кирлĕ чухлĕ вăрлăх участокĕсем уйăрса хăвармалла. Вăрлăх участокĕсене ытти вырăнсенчен чикĕ лартса уйăрмалла. Вĕсене çумкурăксенчен ялан таса тытса тăмалла, йăран хушшисене тăтăш кăпкалатмалла.

Общественăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлеме хĕрӳ вăхăт çывхарса килет. Ку тĕлĕшпе утă çулас тата силос хывас ĕçсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çав вăхăтрах, пленумра тухса калаканĕсем палăртнă тăрăх, чылай районсенчи колхозсенче çак пысăк ĕçе хатĕрленесси ытла та çителĕксĕр пырать. Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин, унăн вырăнти органĕсен, парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен утă пухса кĕртес тата силос хывас ĕçсене кашни колхозра вăхăтра тĕплĕн хатĕрленсе иртерессишĕн кĕрешмелле, общественăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлемелли плана пĕтĕмпех тултармалла тăвас пулать.

КПСС обкомĕн пленумĕ тырпул пухса кĕртме тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама хатĕрленес ĕçсем çине уйрăмах тимлĕ пăхрĕ. Ку çакăн пек пулмалли паллă ĕнтĕ, мĕншĕн тесен, тырпул пухса кĕртес тапхăр вăл—вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешӳ тăтса пыракан тапхăр пулса тăрать. «Тырпул пухса кĕртесси — сезонлă ĕç, — тенĕ И. В. Сталин,—вăл тăхтаса тăма юрамасть. Вăхăтра пухса кĕртрĕн — тыраллă пулатăн, кая юлтăн—çухатрăн». Тырпул пухса кĕртмелли тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли тапхăр, чăннипех, парти организацийĕсен кĕрешӳ пултарулăхне тĕрĕслемелли, ялти политикăлла ĕçĕн шайне тĕрĕслемелли, парти организацийĕсем колхозсемпе МТС-сене мĕнле ертсе пынине тĕрĕслемелли тапхăр пулса тăрать.

Анчах çакна чылай районсенче кирлĕ пек шута илмеççĕ-ха, иртнĕ çулти урокsенчен тивĕçлĕ выводсем тумаççĕ. Иртнĕ çул, сăмахран, тырпул пухса кĕртме вăхăтра хатĕрленмен пирки чылай колхозсемпе районсенче тырпул пухса кĕртесси чылайччен тăсăлса пычĕ, тырпул нумай тăкăнса пĕтрĕ. Комбайнсене, молотилкăсене, вăрлăх тасатакан машинăсене, транспорт инвентарьне юсас ĕç ытла та вăраххăн пырать. Июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне республикăри МТС-сенче комбайнсене юсамалли плана пурĕ те 24,8 процент кăна тултарнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Канаш, Вăрмар, Сурмайдан, Шăхасан МТС-ĕсем юлса пыраççĕ, вĕсем плана пурĕ те 5—6 процент кăна тултарнă. Чылай МТС-сенче тырпул пухса кĕртмелли машинăсене япăх юсаççĕ. Механизаторсен кадрĕсене пухса çитерес тата вĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Нумай колхозсенче халĕ те машинăсемпе инвентаре юсама, витнĕ итемсем, авăнсем, тырă типĕтмелли сушилкăсем, складсем тума тытăнман. «Заготзерно» кантурĕпе Чăвашпотребсоюз та çĕнĕ тырпула йышăнса илме хăйсен склачĕсене, тарасасене, лабораторисене çителĕксĕр хатĕрлеççĕ, складсем патне пымалли çулсене йĕркене кĕртме тивĕçлипе тытăнман.

Колхозсемпе МТС-сем тырпул пухса кĕртме тата государствăна тырă пама хатĕрленес ĕçре кая юлса пынине халех пĕтермелле. Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин, унăн вырăнти органĕсен, партипе совет организацийĕсен, МТС-семпе колхозсен руководителĕсен тырпул пухса кĕме вăхăтра тата пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитме халех тивĕçлĕ ĕçсем туса иртерес пулать.

КПСС Чăваш обкомĕн пленумĕ хăйĕн решенийĕсенче тырпул пухса кĕртме хатĕрленес тĕлĕшпе партипе совет тата ялхуçалăх органĕсем умне конкретлă задачăсем кăларса тăратрĕ. Комбайнсене, молотилкăсене тата ытти çавăн пек машинăсене июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тата пысăк пахалăхпа юсаса çитермелле. МТС руководителĕсен тырпул пухса кĕртекен агрегатсем валли комбайнерсем, комбайнер помощникĕсем, трактористсемпе машинистсем халех тупса çитермелле. Вĕсен, колхоз правленийĕсемпе пĕрле, агрегатсем патĕнче ĕçleме ялан ĕçлекен колхозниксем уйăрса хумалла. Колхозсенче халех витнĕ итемсем, ӳпĕсем, тырă типĕтмелли вырăнсем, хранилищĕсем тума тытăнмалла, киввисене юсаса пĕтермелле. Тырă вырма тухиччен 15 кун маларах кашни колхозпа МТС-ăн, çавăн пекех уй-хир бригадисемпе трактор бригадисен тырпул пухса кĕртмелли, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли ĕç планĕ пулмалла.

Обком пленумĕ обком бюровĕпе парти райкомĕсене колхозсемпе МТС-сенчи парти организацийĕсене ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме кирлине асăрхаттарчĕ. Парти организацийĕсен партилле-политикăлла ĕçе нихçанхинчен те ытла вăйлатмалла, çапла тунипе колхоз ялĕн ĕçченĕсене 1953 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă иртерме мобилизацилемелле.

КПСС обком пленумĕ коммунистсене, комсомолецсене, колхозниксене, МТС работникĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене вăйлă тырпул пăхса çитĕнтерес, тырпула кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртес, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем срокчен парса татас, тăванла висĕ республика хушшинче пыракан социализмла ăмăртура мала тухмалла тăвас тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме чĕнчĕ.

КПСС Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешесси—республикăри парти, совет, комсомол организацийĕсен, мĕнпур ялхуçалăх работникĕсен çывăх вăхăтри тĕп задачи пулса тăрать.

Тăван çĕршывра

Пропагандистсен курсĕсем

ЛЕНИНГРАД, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Паян парти обкомĕпе хула комитечĕ çумĕнче пропагандистсен курсĕсем ĕçлеме пуçларĕç. Курссенче Ленинградри тата Ленинград облаçĕнчи пропагандистсем 1.600 çын вĕренеççĕ.

Малтанхи лекцие «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ тата коммунизм строительствин задачисем» темăпа КПСС Ленинград хула комитечĕн секретарĕ Князев юлташ вуласа панă.

Парти вĕренĕвĕн çĕнĕ çулĕ пуçланиччен пропагандистсем 3.250 çын курссенчен вĕренсе тухаççĕ.

Атă-пушмак фабрикисенче

Ленинградри атă-пушмак çĕлекен «Скороход», «Пролетарская победа», «Восход» фабрикăсен конвейерĕсем çинчен кашни минутрах çĕршер мăшăр атă-пушмак тухса тăрать. Совет çыннисен ыйтăвĕсем ӳссе пынине шута илсе, атă-пушмак çĕлекенсем продукци пахалăхне лайăхлатма, нумай йышши атă-пушмак туса кăларма тăрăшаççĕ.

Халĕ фабрикăсенче кĕркуннепе хĕллехи сезон валли атă-пушмак тума тытăнаççĕ. «Скороход» фабрика 70 йышши атă-пушмак туса кăларса суту-илӳ организацийĕсене панă.

Ленинградри атă-пушмак çĕлекенсем çĕршыври ĕççыннисене хитре тата çирĕп атă-пушмак ытларах парса тăма тăрăшаççĕ. «Скороход» фабрикăра затяжчик пулса ĕçлекен М. Михайловскинчен пример илсе, рабочисем 10 пин çын ытла лайăххăн сортлă атă-пушмак туса кăларассишĕн ăмăртаççĕ. Рабочисем пур ĕçе те хăвăрт тата питĕ лайăх туса пыма тăрăшаççĕ. Фабрикăра продукци пахалăхне лайăхлатма мĕн кирлине туса пыраççĕ. Кивĕ калăпсем вырăнне çĕнĕ калăпсем туянаççĕ, технологи процесне лайăхлатаççĕ. Çакна май пĕрремĕш сорт атă-пушмак 90 процент туса кăлараççĕ. Фабрика производство планне ăнăçлă тултарса пырать.

Ленинградри атă-пушмак предприятийĕсенче чи çĕнĕ машинăсем вырнаçтарса лартаççĕ. «Скороход» фабрикăра хăватлă прессем ĕçлеме пуçланă, çакна май ачасем валли ботинка уйăхра 100 пин мăшăр ытларах çĕлесе кăларма май килнĕ.

Ленинград, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС).

Мускавпа Донбасс хушшинчи чугун çулăн Узловски депо коллективне социализмла ăмăртура çитĕнӳсем тунăшăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав панă. Депо машинисчĕсем планран ирттерсе тĕрлĕрен грузсем вуншар пин тонна турттарнă тата топливо нумай перекетлесе хăварнă.

Чугун çул работникĕсен кунĕ умĕнхи социализмла ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене депо коллективĕ ăнăçлă пурнăçласа пырать. Машинист М. И. Прохоров ертсе пыракан колонна йывăр тиенĕ поездсем вуншар илсе çӳренĕ. Унăн колоннине çак çул çинчи чи лайăх ĕçлекен колонна тесе йышăннă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: М. И. Прохоров ертсе пыракан бригада членĕсем. Сылтăмран сулахаялла—машинист М. И. Прохоров, кочегар Н. Е. Денисов тата машинист помощникĕ И. С. Грозов.

В. КУНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Тырă вырма тухас умĕн

КРАСНОДАР, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Кубань тăрăхĕнче тулă уйĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр пекех сарăлса выртаççĕ. Тулă пучах кăларнă.

Кубань тырпул пухса кĕртме хатĕрленет. Колхозсен уй-хирĕнче кăçалхи çул çĕнни питĕ нумай. Старо-Мински, Кущевски, Штейнгартски тата ытти районсенчи нумай колхозсем кăçал пирвайхи хут кунта акса тума йышăннă «Безостая Шкода» тулă пухса кĕртеççĕ. Çак тулă сортне Старо-Мински районĕнчи «Красное знамя» ялхуçалăх артелĕнчи колхозник-мичуринец Гавриил Трифонович Шкода ĕрчетсе кăларнă. «Красное знамя» колхозра «Безостая Шкода» тулла нумай акса тăваççĕ. Вăл, халиччен акнă ытти сортсемпе танлаштарсан, гектар пуçне 5—6 центнер ытларах тухать.

Хĕлле Краснодар хулинче ялхуçалăхĕнчи рационализаторсен ĕçне кăтартмалли выставка иртернĕ. Кунта комбайнпа тырă вырнă чухне тырă тасатмалли лайăхлатнă хатĕр пулнă. Çав хатĕре Восточнăй МТС комбайнерĕ Димитрий Гонтарь туса хатĕрленĕ. Халĕ ĕнтĕ ку хатĕре çĕршер комбайн çине вырнаçтарса лартнă. Ăна вырнаçтарса лартнă комбайн тасатнă тырра итем çинче тепĕр хут тасатма кирлĕ мар.

Тырпул пухса кĕртме тытăннă вăхăт тĕлне кашни уй-хир бригадинче механизациленĕ итем пулать.

Павловски районĕнчи «За мир и труд» колхозри Кубаньре чи малтан автоматизациленĕ итем тунă. Унта колхозник Василий Шеховцев тунă установка вырнаçтарса лартнă. Ку установкăн тырă тасатакан машина пур, ăна транспортерсемпе, тиемелли тата пушатмалли хатĕрсемпе, тарасасемпе пĕрлештернĕ. Çак итем çинче талăкра 300 тонна тырă çапса тасатма май килет. Итем çинче пурĕ те ик-виçĕ çын кăна ĕçлет.

Итемсене комплекслă механизациленĕ, комбайнерсем, шоферсем тата итемсем çинче ĕçлекенсем сехет графикĕ тăрăх ĕçлени пухса кĕртнĕ тырпула çийĕнчех элеватора ăсатма май парать.

Иртнĕ çулта Кубаньре комбайнсем пĕччеңщерĕн мар, тырпул пулса çитнĕ уя пилĕкшерĕн-ултшарăн тухса ĕçлеме пуçланă. Çапла вара, тырпул пухса кĕртес ĕçе хăвăртлатнă тата тăкаксем сахалтарах пулнă. Кăçал çакăн пек майпа ĕçлесси Кубаньре анлăн саралать.

И. В. Мичурина асăнса

КРАСНОЯРСК, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер крайри садоводсем çутçанталăка çĕнетсе улăштарас тĕлĕшпе чаплă ĕçсем тунă аслă çын И. В. Мичурин вилнĕренпе 18 çул тултарнине паллă тунă. Красноярскри улма-çырла йывăççисем ӳстерес тĕлĕшпе сăнавсем тăвакан станцин ученăй совечĕн ларăвĕ пулнă. Ларăва колхозсенчи садоводсемпе мичуринецсем те хутшăннă. Красноярскри сăнав станцине И. В. Мичурин пуçарнипе уçнă. Станци 20 çул хушшинче çимĕç йывăççисемпе çырла йывăççисем 60 сорт ытла çĕнĕрен туса кăларнă тата кунти çантаlăка хăнăхтарнă. Çав сортсенчен нумайăшне колхозсенче лартса ӳстереççĕ. Крайри колхозсен сачĕсем 3 пин гектар ытла шутланаççĕ. Унта Мичурин ĕрчетсе кăларнă çимĕç йывăççисем лартса ӳстернĕ.

Хальхи вăхăтра станци коллективĕ халиччен ĕрчетсе кăларнă сортсене лайăхлатас, агротехника ыйтăвĕсене татса парас, сад ĕçне механизацилес тĕлĕшпе ĕçлет. Кунта Çĕпĕрти вăрмансенче ӳсекен облепиха текен çырлана ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлеме пуçланă, çак çырлара витаминсем питĕ нумай.

Минусинскри улма-çырла ӳстерес тĕлĕшпе ĕçленĕ çĕрте те научнăй работниксемпе садовод-практиксем пĕрле лару ирттернĕ.

ШАХТЕРСЕН КУНĔ ЯЧĔПЕ

КРИВОЙ РОГ. (ТАСС). Кривой Рогри горняксем Шахтерсен кунĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăнă. Каганович ячĕпе, Фрунзе ячĕпе, Киров ячĕпе тăракан тата ытти рудниксен коллективĕсем талăкри задание чылай ирттерсе тултараççĕ. Планран ирттерсе çĕршер тонна тимĕр тăпри кăларса параççĕ.

Сталинла премин лауреачĕ Алексей Семиволос ертсе пыракан рудникри горняксем стахановла вахтăна тăнă кун пысăк çитĕнӳ тунă. Вĕсем планран ирттерсе тимĕр тăпри нумай кăларнă.

Республикăри хуласемпе район центрĕсенче

Çамрăкланнă хула

Аслă Атăлăн сулахай енче Йăлăм вăрманĕ сарăлса ларать. Сылтăм енче — илемлĕ чул çуртсем, чечеке ларнă йывăççем, заводсен корпусĕсем курăнаççĕ. Пристань çумĕнче пăрахутсем тăраççĕ, çыран хĕррипе моторлă кимĕсем, баржăсем ирте-ирте каяççĕ.

Ку вăл—Сĕнтĕрвăрри хули, район центрĕ. Ĕмĕрсен виçипе танлаштарса пăхсан, вăл Шупашкар, Çĕрпӳ, Улатăр хулисенчен чылай çамрăк. 1909 çулта С. Южаков редакцилесе кăларнă «Пысăк энциклопедире» Сĕнтĕрвăрри çинчен çапла каланă: «Сĕнтĕрвăрри, ĕлĕк Сĕнтĕр ялĕ пулнă. 1856 çултанпа—хула. Хусан кĕпĕрнинчи Шупашкар уездне кĕрет. Унта пурăнакансенчен чылайăшĕ промыслара тата алăçтаçăсем пулса ĕçлеççĕ...»

Хула ятне илнĕ пулсан та, вăл малтанхи вăхăтра ял сăн-сăпатĕнчен уйрăлман.

Хула тулашĕнчи пĕр пĕчĕк спирт завочĕсĕр пуçне, нимĕнле предприяти те пулман. Анчах Сĕнтĕрвăрри хули вара хăйĕн ăста тимĕрçисемпе таврара чапа тухнă. Кунта хальхи Кузнечнăй урамра кăна нумаях та пулмасть 70 тимĕрçĕ пуртăсем, сава тимĕрĕсем, ăйăсем туса пурăннă.

Хулари пĕр пĕчĕк шкулăн алăкĕсем ĕççыннисен ачисемшĕн хупă пулнă. Çавнашкалах кунта пĕр пĕчĕк больница та ĕççыннисене трахомăран, ытти чирсенчен сыватма пултарайман. Кунта нумайранпа Геркин профессор ĕçленĕ. Унăн ячĕпе больница пысăк хисепре тăнă. Хула халăхĕ Атăл тăрăх ĕçлеме çӳренĕ.

Октябрьти Социализмла Аслă революци, Ленин — Сталин самани хула пурнăçне çĕнĕ те аслă çул çине илсе тухрĕ. Чи лайăх çуртсене шкулсем валли панă, пĕчĕк предприятисемпе алăстисен артелĕсем хăватлăн аталанса пыма тытăннă.

Хальхи Сĕнтĕрвăрри хулине Октябрьти Социализмла Аслă революци çĕнетнĕ хула тесе каламалла. Атăл хĕрринче судоверфь çитĕнсе ларчĕ, вăл пысăк баржăсем, моторлă кимĕсем туса кăларать. Çав кимĕсене тунă çĕрте хулари ФЗО шкулĕнче вĕренекен çамрăксем хастарлă ĕçлеççĕ. Райпромкомбинат урапа-çуна, катка-пичке нумай туса, Атăл тăрăх ăсатать. Унăн мастерскойĕсенче кĕпе-йĕм, тумтир, атă пушмак çĕлеççĕ е юсаса параççĕ. Çавăн пекех «Стройматериал», «Портной», «Крестьянский кузнец» артельсем ĕççыннисене кулленхи кирлĕ таварсем çулсерен çĕршер пин тенкĕлĕх ытла туса кăлараççĕ.

Сĕнтĕрвăрри шкулсемпе пуян. Кăçал 55 çул тултарнă вăрман техникумĕ таврари паллă шкул пулса тăрать. Унта кăçалхи вĕренӳ çулĕнче кăна 721 çын вĕренет. Çак кунсенче аслă классенче вĕренекенсем дипломсем çырса хатĕрлеççĕ, часах вĕсем вăрман хатĕрлес ĕçре тата сĕтел-пукан тунă çĕрте ĕçлекен техниксем пулса тухаççĕ. Çак техникумра 22 çын аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă учительсем вĕрентеççĕ. Çитес вĕренӳ çулĕнче тата 270 çын вĕренме илеççĕ, вара унта 860 çын ытла вĕренме тытăнать.

Ялхуçалăх техникумĕ гидромелиораторсем, ялсенче электростанцисем тăвакан техниксем тата çĕр йĕркелекенсем вĕрентсе кăларать. Кунта та аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă 23 преподаватель ĕçлет. Нумаях пулмасть техникумра 25 çул ытла вĕрентекен София Ивановна Федотована Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕн ятне панă.

Тата хулара вăтам шкул, çичĕ çул вĕренмелли тата пуçламăш шкулсем, икĕ çул вĕренмелли вăрман шкулĕ, профтехнически шкул, ФЗО шкулĕ пур.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕç анлăн сарăлса кайнă. Хулари больницăпа поликлиника пĕрлешĕвĕнче халĕ 16 врач, вăтам медицина работникĕсем 60 ĕçлеççĕ. Больницăпа поликлиникăна пĕрлештернĕ май халăх сывлăхне сыхлас ĕç чылай лайăхланнă. Кунта халĕ рентген, хирурги, физиотерапи, шăл сыватмалли, шăл лартмалли, куç чирĕ тата ытти кабинетсем, лаборатори, хĕрарăмсемпе ачасен консультацийĕ тата ыттисем те пур.

Хулари культура çуртĕ, водниксен клубĕ культура ĕçĕн центрĕсем пулса тăчĕç. Çак клубсен пысăк залĕсенче Шупашкартан килекен артистсем спектакльсем, концертсем лартса параççĕ. Культура çурчĕ çумĕнчи драмкружок та юлашки вăхăтра А. Островский çырнă драмăсене ăста кăтартрĕ. Уйрăмах кунта вăрман техникумĕнчи драмкружок чапа тухрĕ. Хулари художествăлла пултарулăх кружокĕсен концерчĕсене итлеме халăх нумай çӳрет, концертсен программинче вырăс халăх юррисемпе тата совет композиторĕсен юррисемпе пĕрле Сĕнтĕрвăрринчи композиторăн Анатолий Тогаевăн юррисем те чаплăн янăраççĕ.

Сĕнтĕрвăрри уйрăмах сталинла пилĕкçуллăхсенче вăйлăн аталанса пычĕ. Партин XIX-мĕш съезчĕ ССР Союзне аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче Атăл çинче Шупашкарти гидроэлектростанцине тума пăхни татах та пысăк ĕмĕтсене чаплăн пурнăçлама май парать. Часах Сĕнтĕрвăррипе ун таврашĕнче те гидростанци вăйĕпе ĕçлекен пысăк заводсемпе фабрикăсем çитĕнсе ларĕç.

Сĕнтĕрвăрри кунтан-кун çамрăкланса, илемленсе пырать.

К. НАМАНГАН.



ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сĕнтĕрвăрри хулинчи Хĕрлĕ площадьре (сулахайри); Май урамĕнчи ача çурчĕ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕсем.

СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ

Малта пыракан ял Советĕнче

ШАХАСАН. Çĕнĕ Чăлкасси ял Совечĕ (председателĕ И. Е[illegible] юлташ) юлашки çулсенче организа[illegible]массăлла ĕçе чылай лайăхлатрĕ[illegible] Советне кĕрекен колхозсемпе[illegible] учрежденийĕсен ĕçне хивĕçл[illegible] пыма пулăшать.

Ял Совечĕ çир[illegible]тăрăх ĕçлет, хăй йышăннă [illegible] пурнăçлассишĕн тимлĕн кĕре[illegible]. шухăшласа хатĕрленĕ ĕç пл[illegible]вет исполкомне малашне мĕнле [illegible]умаллине уççăн кăтартса парать[illegible] туса хатĕрлеме депутатсене, [illegible]ва, суйлавçăсене хутшăнтараççĕ. Çак [illegible]вартала тумалли мĕнпур ĕçсене плана кĕртме май парать.

План тăрăх кашни уйăхра пĕр сесси, исполкомăн икĕ ларăвĕ тата ытти канашлусем пулса иртеççĕ.

Сесси пулассине çинчен исполком депутатсене темиçе кун маларах пĕлтерсе хурать, сесси кун йĕркине кĕртнĕ ыйтусем çинчен пĕлтерет. Депутатсемпе активистсем сÿтсе явмалли ыйту тăрăх тухса калама хатĕрленнĕ май ĕçсем мĕнле пулса пынине тĕплĕн тĕрĕслеççĕ. Ку вăл сессире е исполком ларăвĕнче тĕплĕ решени йышăнма май парать. Сессисенче депутатсем пысăк активлăх кăтартаççĕ, ĕçри çитменлĕхсене тĕплĕн палăртса, вĕсене пĕтерме паха сĕнÿсем параççĕ.

Ял Советĕнче тăватă яланхи комисси ĕçлет. Комиссисенче 16 депутат тата 48 активист. Актив хушшинче колхоз ĕçĕнче малта пыракансем, бригадирсем, ферма работникĕсем, учительсем пур. Çавăн пекех ял Советне коммунистсемпе комсомолецсем ĕçре пысăк пулăшу параççĕ.

Ялхуçалăх комиссийĕ (председателĕ И. Кузьмин юлташ) хăйĕн ĕçне аван туса пырать. Ку комисси членĕсене пурне те колхозсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем уй-хир ĕçĕсен пахалăхне тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ. Ял Совечĕ йышăннă решенисем çинчен ĕççыннисене каласа параççĕ, решенисене колхозсенче, уйрăм бригадăсенче мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăраççĕ.

Сураки вăхăтĕнче ялхуçалăх комиссийĕн членĕсем колхозсенче агротехника кăтартăвĕсене мĕнле пурнăçласа пынине сăнарĕç. Малтанхи кунсенче «За коммунизм» колхозра 2-мĕш бригадăри Ф. Назарова колхозница плуг юсавсăр пирки çĕре ăшăх сухаланă пулнă. Ялхуçалăх комиссийĕ сĕннипе колхоз правленийĕ колхозница ĕçлекен плуга юсама П. Кузнецов тимĕрçе хушрĕ. Çапла вара Назарова, ытти колхозниксем пекех, лайăх сухалама тытăнчĕ, кулленхи ĕç нормине иртерсе тултарса пычĕ. Ялхуçалăх комиссийĕ çирĕп тĕрĕслесе тăнине пула Ильич ячĕпе тăракан тата «За коммунизм» колхозсем çураки планне ăнăçлă тултарчĕç.

Колхозсем выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе те чылай пысăк çитĕнÿсем турĕç. Суйлавçăсем Ильич ячĕпе тăракан колхозра чăх-чĕп тата лаша витисем тума наказ панăччĕ. Çак наказа пурнăçласа, халĕ Н. Гаврилов юлташ бригади 2.000 саман кирпĕч турĕ. Вăл кирпĕчрен чăх вити тума палăртнă. Саман кирпĕч тунă çĕрте А. Чернова, К. Алексеева юлташсем, тăрăшса ĕçлеççĕ.

Благоустройство комиссийĕн председателĕ пулса Н. Романов юлташ ĕçлет. Комисси пĕлтĕр Ильич ячĕпе тăракан колхозра 2 çăл, пĕр пысăк кĕпер тутарнă. Кăçалхи февраль уйăхĕнче суйлавçăсем татах та пысăк наказсем панă. Комисси членĕсем суйлавçăсен сĕнĕвĕсене пурнăçлассишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ. Кăçал Ильич ячĕпе тăракан колхозра уй-хире шăрăхран хÿтĕлемелли тăрăха 8.960 тĕп тĕрлĕрен йывăççем, урам хушшине 3 пин йăмра тата ытти йывăççем лартнă. Халĕ Хурамал ялĕнче пысăк пĕве тăваççĕ, 3 километр тăршшĕ çула якатса хытараççĕ. Ялта çĕнĕ фельдшер пункчĕ тума сĕнÿ панăччĕ. Çак ĕçе тума материалсем çителĕклĕ хатĕрлесе хунă. Суйлавçăсем çичĕ çул вĕренмелли шкулта çĕнĕрен пĕр класс вырнаçмалăх пÿлĕм тума ыйтнăччĕ. Халĕ ăна тума 40 кубометр йывăç хатĕрленĕ. Строительство бригади паян-ыран ĕçе тытăнать.

Ял Совечĕ культурăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркелесе пырать. Клуб ĕçĕ çинчен сессире клуб заведующийĕн Алексеев юлташăн отчетне итленĕ. Колхозсенче культурăллă-массăллă ĕçе клуб план тăрăх туса пырать. Лекторсен ушкăнĕнче (руководителĕ çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ А. Антонов) 12 лектор. Вĕсем кăçал ял Советĕнче тĕрлĕ ыйтусемпе 80 яхăн докладсемпе калаçусем иртерчĕ. Сураки вăхăтĕнче агитаторсем, хирте час-часах пулса, калаçусем иртерчĕç, çĕнĕ хыпарсемпе паллаштарчĕç. Вулав çуртĕнче «Партин XIX-мĕш съезчĕ», «Ялхуçалăхĕ çĕнĕ пилĕкçуллăхра» тата ытти темăсем тăрăх витринăсемпе диаграммăсем тунă.

Халĕ ял Совечĕ колхозсене çул-йĕр ĕçне анлăн хутшăнтарма тăрăшать. «За коммунизм» ялхуçалăх артелĕнче çул-йĕр бригади тунă. Унта 24 çын çуран ĕçлеççĕ. Бригадăна пĕр автомашина, 10 лаша уйăрса панă. Колхозниксем çул-йĕр планне июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательствăсем илчĕç.

Г. ЛУЧ.

Выльăх-чĕрлĕх валли—паха витесем

ИШЛЕЙ. «За коммунизм» колхоз выльăх-чĕрлĕхрен çулсерен пысăк тупăш илет. Иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕхрен илнĕ тупăш 309 пин тенкĕ пулнă.

Выльăх-чĕрлĕхе усрама юлашки çулсенче çуртсем чылай лартнă. Çапах та витесем çителĕклĕ мар-ха. Кăçал çĕнĕрен сысна тата сурăх витисем лартма, омшаник, гараж тума палăртнă.

Витесем тума 1.150 фестметр йывăç касса турттарнă тата строительствăра кирлĕ ытти материалсене та хатĕрленĕ. Хальхи вăхăтра колхозăн строительство бригади сысна вити тăвать.

Колхозри парторганизаци строительство ĕçне хутшăнса ĕçлеме тата колхозниксем хушшинче агитацилле ĕçе туса пыма коммунистсене çирĕплетнĕ.

Н. САРМОСОВ.

* * *

Киров ячĕпе тăракан колхозра строительство ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Строительство бригадине ăста платник В. Захаров ертсе пырать.

Юлашки икĕ çул хушшинче колхозра çĕнĕрен правлени çурчĕ, витесемпе çуртсем, ялхуçалăх машинисем усрамалли сарай, автогараж, çĕрулми хумалли икĕ хранилище, бензохранилище тунă. Кивисене чылай юсанă. Вырăнти строительство материалĕсемпе усă курнă.

Колхозра кăçал та строительство ĕçĕ пысăк пулать. 40-шер ĕне вырнаçмалăх виçĕ вите, кормокухня тата ытти чылай витесемпе çуртсем тума палăртнă. Хĕлле 600 кубометра яхăн йывăç касса хатĕрленĕ, халĕ çав йывăçа колхозниксем пикенсех яла турттараççĕ.

Иртнĕ çулта колхоз 20 пин ытла саман кирпĕчĕ туса усă курчĕ. Унпа кăçал та анлăн усă курма палăртнă.

А. КОЗЛОВ.

Чкаловски районĕ.

Паха çул-йĕршĕн!

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Комсомольски районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем çул çине чул сараççĕ. Малти вырăнта—М. Н. Романов, А. И. Яковлева тата А. А. Никитина.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

ÇУЛ ÇИНЧЕ

Канаш енчен Комсомольски районне пырса кĕрсенех çул çинче чул саракансене куратăн. Кунта Калинин ячĕпе тата Берия ячĕпе тăракан колхозсенчен килнĕ юлташсем ĕçлеççĕ.

Калинин ячĕпе тăракан колхозран чул сарнă çĕрте вунă çын ĕçлет. Пиллĕкĕн чул сараççĕ, ыттисем вĕсем патне чул, хăйăр çĕклесе тăраççĕ. Ĕç пĕр минутлăха та чарăнмасăр, малтан мала кайса пырать.

— Пĕлтĕр пирĕн колхоз районта чул сарас тĕлĕшпе пĕрремĕш, тăпра купалас тĕлĕшпе иккĕмĕш вырăна йышăннăччĕ...—тет Калинин ячĕпе тăракан колхозăн çул-йĕр бригадирĕ Г. Антонов юлташ.

— Кăçал та мала тухатпăр,—бригадир шухăшне пĕлнĕ пекех каласа хучĕ Никитина юлташ.

Антонов юлташ кăçалхипе саккăрмĕш çул çул-йĕр бригадине ертсе пырать. Унăн опыт пысăк. Колхозра çул çине чул сарма пĕлекен çынсем çителĕклĕ пулман. Тăватă çул хушши çул çине чул сарнă Анна Никитина коммунисткăна ыттисене вĕрентме хушнă.

Никитина юлташ çамрăксене тăрăшса вĕрентет, пулăшать. Халĕ ĕнтĕ пурте нормăна иртерсе тултараççĕ.

Колхоз хăйĕн ĕççыннисене вырса тăма çывăх ялта хваттер тупса панă. Хваттерте апат пĕçерме вут-шанкă та парсах тăрать. Ĕçленĕ çĕрте ĕçме пичкепе шыв турттарса параççĕ.

— Çынсем сахалтарах, — асăрхаттарамăр эпир бригадира.

— Пирĕн-и?—куçран чăр пăхса ыйтрĕ Антонов юлташ. — Çул çине тăпра купаланă çĕрте 25 çын ĕçлет.

Комсомольски витĕр тухса Патăръел еннелле кайнă çĕрте, чăнах та, сакăрçĕр çын ытла çул çине тăпра купалать-мĕн. Кивĕ çул çĕрпе шаях. Çумăр хыççăн час типмест, исленсе ванса пĕтет. Хĕлле юр лартнă пирки машинăсемпе çÿреме çук. Халĕ кивĕ çул çумне тăпра купаласа тепĕр çул тăваççĕ. Çĕнĕрен тăвакан çÿлĕ çул тăрăх хĕлĕн-çăвĕн пĕр чарăнмасăр машинăсем çÿремелле пулать.

Кăнтăрлахи апата чарăннă вăхăтра кооператив лавккисем çул çинче ĕçлекенсене тĕрлĕрен таварсем сутрĕç. Культработниксем хаçат-журналсем илсе килсе пачĕç, вĕсене сасăпа вуларĕç. Врачсем шăрăхран сыхланмалли майсем çинчен калаçусем иртерчĕç.

Хĕвел аннă вăхăтра «Знамя коммунизма» колхозăн çул хĕррине туса лартнă хÿшши енчен купăс калани, радио калаçнă сасă илтĕнчĕ. Кÿршĕри участоксенче ĕçлекенсем илĕртекен сасă еннелле туртăнчĕç.

«Знамя коммунизма» колхозран килнĕ колхозниксем кунта, çул хĕрринчи хÿшĕрех выртса пурăнаççĕ. Клуб заведующийĕ Михайлов комсомолец халĕ культурăллă-массăллă ĕçе пĕтĕмпех кунта — халăх нумай пуçтараннă çĕрте иртерме тăрăшать. Кăнтăрла боевой листок кăларать, кам мĕнле ĕçленине шута илсе кăтарту хăми çине çырать, звеносен хушшинчи ăмăртăва организацилет, тĕрлĕрен ыйтусемпе калаçусем иртерет. Ĕç пăрахсан—пурте хавасланса кĕтсе тăракан юрă праçникне хатĕрленсе юрлаççĕ.

Район центрĕ енчен лозунгсемпе илемлетнĕ автомашина вĕçтерсе çитрĕ. Машина çине ларса килнĕ çамрăксем—район центрĕнче ĕçлекен комсомолецсем. Вĕсем кунта час-часах концертсем параççĕ. Çавăнпа вĕсене курсанах пĕтĕм халăх машина тавра пуçтаранчĕ. Çамрăксем такмаксем каласа юрлама пуçласанах халăх тăвăллăн алă çупма пуçларĕ.

Тарасовпа Орлов юлташсем район центрĕнчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем паян кăнтăрла кунта пулса çул тăвакансен ĕçĕпе паллашнă хыççăн такмаксем çырнă та çамрăксене юрлама вĕрентнĕ. Çул тăвакансен ĕçĕпе пурнăçне сăнласа кăтартнăран пурте юратса итлеççĕ ĕнтĕ вĕсен такмакĕсене.

Нумай такмаксенчен пĕрне «Дружба» колхоз кăçалхи çул-йĕр строительствин планне тултарни çинчен хывнă.

Концерт вĕçленчĕ. Ывăнма пĕлмен çамрăксем ушкăнăн-ушкăнăн тăрса юрлама, ташлама пуçларĕç.

— Кайрăмăр,—терĕ «Завет Ильича» колхозран килнĕ Маруся Цурлушкина хăйĕнпе юнашар тăракан тантăшне Зина Зубовăна.

— Тăхтăр-ха, ăçта каятăр эсир? — вĕсем кайнине курсан ыйтрĕç тата икĕ хĕрача.

— «Дружба» колхоз членĕсем плана тултарнă. Тĕттĕм пуличчен пикенсе ĕçлесен, эпир те çул çине тăпра купаламалли плана тултаратпăр, — илтĕнчĕ Маруся сасси.

Часах тăватă хĕрача тăпра çĕклеме пуçларĕç. Ыттисем те вĕсен еннелле утрĕç.

Çул çинче каллех ăмăрту пуçланса кайрĕ.

П. ЩИПЦОВ.
(Хамăр корр.).

Республика уй-хирĕсенче

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи МТС-сем КОМБАЙНСЕМ ЮСАНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА
1953 çулхи июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

МТС-сем	Комбайнсем юсамалли плана тултарнă
Советски	100,0
Йĕпреç	62,5
Первомайски	57,9
Пăрачкав	54,5
Улатăр	41,4
Елчĕк	40,5
Чкаловски	38,2
Çĕрпÿ	33,3
Етĕрне	33,3
Шăмăршă	32,0
Сĕнтĕр	30,8
Хĕрлĕ Чутай	28,6
Çĕмĕрле	27,3
Вăрнар	25,9
Муркаш	25,0
Элĕк	22,2
Сĕнтĕрвăрри	16,7
Комсомольски	12,0
Тăвай	11,5
Ишлей	10,0
Кувакино	10,0
Сиява	10,0
Шупашкар	10,0
Куславкка	7,1
Шăхасан	6,2
Вăрмар	5,7
Сурмайдан	5,9
Канаш	5,5
Калинино	—
Красноармейски	—
Октябрьски	—
Чурачăк	—

Вăйлă тырпулшăн

Сурмайдан машина-трактор станцийĕнчи механизаторсем тырпул тухăçлăхне ÿстерессишĕн вăй шеллемесĕр тăрăшса ĕçлеççĕ.

МТС ыраш калчине суркунне сĕрелемелли плана 113 процент тултарнă. Кĕрхи çĕртме тунă çĕре вăхăтра сĕреленĕ. Культиваци тумалли плана 164 процент пурнăçланă. Суракинче ĕçлемелли плана 101,5 процент тултарнă.

Суракинчен пушаннă тракторсене ирхи çĕртме сухи тума куçарнă. МТС çĕртме сухи тумалли плана та вăхăтра тултарчĕ. Вăрлăх хатĕрлекен «Путь Ильича» колхозра ирхи çĕртме сухине майăн 20-мĕш тĕлне туса пĕтернĕ. Ку ĕçре А. Горбунов, Г. Кулыгин, А. Филатов, В. Разоренов, Г. Баушев, Е. Селенина трактористсем сменăри задание 115—125 процент тултарса пычĕç.

Механизаторсем колхозсене техникăлла культурăсене вăхăтра акса хăварма пулăшрĕç. Махоркăна машинăпа лартса параççĕ. Махорка лартмалли участоксене çемçетсе хатĕрлесе хунă. Махорка калчине ÿстернĕ.

МТС-ра тырпул пухса кĕртме хатĕрленессине те манмаççĕ. Пĕр комбайн тата икĕ мотор юсаса пĕтернĕ. Илсе килнĕ çĕнĕ комбайнсене пуçтарса çитереççĕ. Утă çулмалли тата пуçтармалли машинăсене юсаççĕ.

А. ИВАНЦЕВ.

Техникăлла культурăсем акмалли плана тултармалла

ЧУРАЧĂК. Районта уйрăм колхозсем техникăлла культурăсем акмалли плана çултан-çул пурнăçласа пымаççĕ. Ку енĕпе район кăçал та чылай кая юлчĕ.

Хăшпĕр колхозсенче халиччененех кантăр акма тытăнманнă пĕрех. «Труд» колхозăн 16 гектар кантăр акмалла пулсан, 1,5 гектар кăна акнă. Колхоз председателĕ Тимофеев юлташ акма вăрлăх çитмест тесе лăпланса пурăнать. «Красный самолет», «Комсомолец», «Стахановец», *«Броневик»*, *«Гигант»* колхозсен руководителĕсем те çавăн пек шухăшпа пурăнаççĕ. «Динамо» колхозра кантăр ăçта акмалли вырăнне те пĕлмеççĕ. Колхоз председателĕ Васильев юлташ Бапащри хатĕрлев пунктĕнчен уйăрса панă кантăр вăррине илмен. Планпа кантăр 20 гектар акмалла пулсан, 9 гектар çеç актарнă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 15 гектар вырăнне, вăрлăхĕ çителĕклĕ пулин те, 11 гектар кăна акса хăварнă. Колхоз председателĕ Денисов юлташ: хамăра кирлине акнă, кантăр вырăнне хуратул, сĕлĕ акрăмăр, тесе ответлет. Вăл государство планне пурнăçласа пырассишĕн кĕрешмест.

Техникăлла культурăсем акас ĕçе çавăн пекех «Память Сталина», «Красный флот», «Прожектор», «Родина» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче те хăкламаççĕ.

Малта пыракансен опычĕ кантăр лайăх çемçетнĕ çĕр çинче пысăк тухăçлă пулнине кăтартать. Иртнĕ çулта *«Победа»* колхозра планпа палăртнинчен икĕ хут ытла кантăр вăрри туса илнĕ. Ку колхоз кăçал та техникăлла культурăсем акмалли плана вăхăтра тултарчĕ.

Пирĕн районти колхозсенче кантăр акас ĕç начар пыни ялхуçалăх пайĕ тата ялхуçалăх специалисчĕсем кантăр акмалли задание кашни колхозрах пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешменнинчен килчĕ.

М. НИКОЛАЕВ,
Хатĕрлев пункчĕн заведующийĕ.

Механизаторсен ăмăртăвĕ

ЕЛЧĔК. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем МТС-ри 11-мĕш трактор бригадипе тачă çыхăнса ĕçлеççĕ. Трактор бригади (бригадирĕ А. Мякинин юлташ) пулăшнипе колхоз çуракине ăнăçлă иртерчĕ.

Тракторсемпе колхоза 1.000 гектар ытла çурхи тырăсем акса панă. Уйрăммăнах комсомолец А. Никифоров лайăх ĕçленине палăртмалла. Вăл хăй ĕçлекен трактор агрегачĕпе куллен 65—70 гектар тырă акса пычĕ, суракинче ĕçлемелли задание 150 процент ытла пурнăçларĕ.

11-мĕш трактор бригадинчи трактористсем халĕ çĕртме сухи тăваççĕ. Çĕртме тунă çĕрте те А. Никифоров тракторист малта пырать.

В. НАУМОВ.

* * *

ÇĔРПУ. Орденоносец Т. Степанов юлташ ертсе пыракан трактор бригади хăй ĕçлекен кашни гектартан вăтам шутпа 17-шер центнер тĕштырă туса илессишĕн кĕрешме сăмах панă. Ăмăрту обязательствисене пурнăçа кĕртес тесе, бригада членĕсем пĕрмаях тăрăшса ĕçлеççĕ.

Бригадăри трактористсем колхозсене суракине вăхăтра иртерме пулăшрĕç. Сураки планне пур енĕпе те иртерсе тултарнă.

Сураки хыççăн тракторсемпе колхозсен уй-хирĕсене тислĕк нумай кăларнă. Çĕртме сухи тунă çĕрте уйрăмах М. Петров, В. Дмитриев, М. Степанов, В. Тимофеев трактористсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленхи нормăна яланах иртерсе пурнăçлаççĕ, çĕртме сухине июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерме тăрăшаççĕ.

Бригада халĕ утă çулма, силос хывма, торф турттарма хĕрсех хатĕрленет.

В. АЛЕКСЕЕВ.

Партипе государство дисциплинине çирĕп пăхăнса пымалла

Парти Уставĕ каланă тăрăх, партире пуриншĕн те пĕр дисциплина пулмалла, вăл дисциплинăна кашни коммунистăнах пăхăнмалла. Уставăн çак сăмахĕсене яланах асра тытмалла: «Партире икĕ дисциплина—пĕри руководительсемшĕн, тепри рядовой членсемшĕн—пулма пултараймасть. Партин пур коммунистсемшĕн те,—вĕсен тава тивĕçлĕ ĕçĕпе вĕсем мĕнле вырăнта ĕçленине пăхмасăр,—пĕр дисциплина, пĕр закон». Пирĕн парти дисциплина пурринпе вăйлă. Парти дисциплини партири пĕрлĕхе çирĕплетет. Парти вăйĕпе хăватне парти пĕрлĕхĕ пулни кăна сыхласа хăварма пултарать.

Парти членĕн тивĕçĕ вăл партие тата ытларах çирĕплетесси пулса тăрать. Партие çирĕплетме кашни коммунистăн хăйĕн ĕçĕпе пулăшмалла. Коммунист кирек мĕнле ĕçре пулсан та, унăн хăйĕн ĕçне чĕререн парăнса туса пымалла. Унăн тивĕçĕ государство заданийĕсене вăхăтра пурнăçласа пырассишĕн кĕрешесси пулать. Апла пулсан, государство дисциплинине хытă тытса пыни кирлĕ.

Парти организацийĕн, хăйĕн пур майĕсемпе те усă курса, коммунистсене партипе государство дисциплинине пăхăнса пыма, парти хушнă ĕçе çине тăрса пурнăçлама вĕрентмелле. Парти организацийĕсен партипе государство дисциплинине пăсакансемпе хытă кĕрешмелле, коммунистăн парти умĕнчи ответлăхне ÿстерсе, ĕçре активлă, пултарулă пулма хăнăхтармалла. Партипе государство дисциплинине çирĕп пăхăнса пыни партипе правительство решенийĕсене пурнăçламалли май пулса тăрать.

Пирĕн районта парти решенийĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа, партипе государство дисциплинине кăтартуллăн пăхăнса пыракан коммунистсем нумай.

«Победа» колхоз иртнĕ çулсенче кая юлса пыратчĕ. Колхозниксен ĕç дисциплини начарччĕ, колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснă фактсем пурччĕ, çĕрĕçне кивĕ майсемпе туса пыратчĕç. Артеле ертсе пыма С. Носков коммуниста суйланăранпа колхоз палăрмаллах малалла ÿсет. Ĕç дисциплини çирĕпленчĕ, колхозниксем уй-хирте те, выльăх-чĕрлĕх пăхнă çĕрте те хастарлă ĕçлеççĕ. Вĕсем халĕ вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ. Кăçал 532 гектар кĕрхи калчасем çине минераллă удобренисем сапнă, 2.000 тонна ытла тислĕк кăларнă. Колхозра çавăн пекех техникăлла культурăсем туса илесси те аванланса пырать, кăçал артель членĕсем 20 гектар кантăр, 60 гектар йĕтĕн, 25 гектар махорка акса хăварчĕç.

Носков юлташ колхоза çирĕплетессишĕн, унăн хуçалăхне пуянлатассишĕн тăрăшса ĕçлет. Вăл урăх облаçсенчи лайăх ĕçлекен колхозсене кайса вĕсен опычĕпе паллашать, çав опыта хăйсен колхозĕнче пурнăçласа пырать. Носков юлташăн ĕçĕнче чи малтанах партилле принципа тытса пырасси, хăйĕнчен тата ыттисенчен ĕçри дисциплинăна çирĕп тытса пыма ыйтасси, колхозниксемпе ытларах çыхăну тытасси пысăк вырăн йышăнать. Носков юлташа ĕçе ертсе пыма хăйĕн идейăлла-политикăлла пĕлĕвне куллен ÿстерсе пыни пулăшать. Парти организацийĕпе çирĕп çыхăну тытни, колхозниксен ăнлануллăхне ÿстерессишĕн тăрăшни ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума май парать.

Анчах уйрăм работниксем урăхла ĕçлеççĕ, вĕсене шанса панă ĕçе çиелтен туса пыраççĕ, хăйсен интересĕсене малти вырăна хурса, государство ĕçне япăхтараççĕ, плана тултарма чăрмантараççĕ. Кун пек йĕрке Çĕмĕрле вăрманпромхозĕнче йăлана кĕнĕ. Вăрман пункчĕсенчи механизмсемпе усă курса йывăç касса хатĕрлемелли тата турттармалли уйăхлăх плансене панă чухне кунта механизмсен вăй-хăватне пĕтĕмпех шута илмеççĕ, çапла вара, плана тултарассине çăмăллатса, государство заданине тултарма чăрмантараççĕ. Партин XIX-мĕш съезчĕ производствăра пур майсене те шыраса тупса вĕсемпе усă курма хушса хăварчĕ. Анчах та Çĕмĕрле вăрманпромхозĕнче, çав кăтартăва пурнăçлас вырăнне, пур майсенех пытарса хăварма пикеннĕ. Кун пек туни вăл государство дисциплинине пăсни пулать.

Партипе государство дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçленĕ май, КПСС райкомĕ государство дисциплинине тепĕр тĕрлĕ пăсса ĕçлекенсемпе тĕл пулчĕ. Кун йышши çынсем совет законĕсене вĕсемшĕн çырман тесе шутлаççĕ. Вĕсем хăйсене шанса панă ĕç вырăнĕнчен хăйсене иртĕхме май паракан йăва туса хураççĕ, ун пек çынсем вара государство умĕнчи тивĕçе, ответлăха манса каяççĕ. Сурски лесничествăра лесник пулса ĕçленĕ П. И. Кайнов, хăй ĕç вырăнĕпе усă курса, хăшпĕр çынсене хăй ирĕкĕпе государство вăрманне касма ирĕк панă, çапла вара государствăна пысăк сиен кÿнĕ. Паллах, ку коммунист хăй кам иккенне манса кайнă. Çавăнпа та парти райкомĕн бюровĕ Кайнова парти енĕпе çирĕп ответ тыттарчĕ.

Пирĕн çĕршывра парти, совет тата хуçалăх ĕçне ертсе пыракан кадрсен пысăк çарĕ ÿсрĕ, вĕсем, çĕршывăн обществăлла тата производствăлла пурнăçне тĕплĕн пĕлсе, ĕçе хастарлă ертсе пыраççĕ.

Ертсе пыракан кадрсен ĕçĕ тата вĕсем государство дисциплинине тытса пырасси вĕсен ăнланăвĕ мĕнле шайра тăнинчен килет. Ăнланулăх мĕн чухлĕ пысăкрах, партипе государство дисциплини те çавăн чухлĕ çирĕпрех. Ертсе пыракан кадрсем хăйсен пĕлĕвне ÿстерме тăрăшмаççĕ пулсан, практикăлла ĕçе политикăлла вĕренÿпе çыхăнтармаççĕ пулсан, ун йышши çынсем часах дисциплинăна пăсас çул çине тăраççĕ. Вĕсем умри задачăсене курмасăр хăйсен çеммипе ĕçлеççĕ.

«Труд» колхозра председатель пулса Тихонов ĕçлерĕ, вăл хăйĕн политикăлла пĕлĕвне ÿстермерĕ, унăн тавракурăмĕ ансăрланса пычĕ, вăл умра тăракан задачăсене курми пулчĕ, колхоза япăх ертсе пычĕ, государство панă заданисене вăхăтра тултарассишĕн кĕрешмерĕ. Пуçламăш парторганизацин секретарĕ Муравьев юлташ та Тихонов тунă йăнăшсене вăхăтра юсама тăрăшмарĕ. 1952 çулта парти райкомĕн бюровĕ ку колхозăн ĕçĕсем çинчен икĕ хут сÿтсе яврĕ, обществăлла хуçалăха çĕклеме пулăшакан решенисем йышăнчĕ, анчах Муравьевпа Тихонов вăл решенисене пурнăçлассишĕн начар тăрăшрĕç. Тихонов юлташа колхозниксем юратми пулчĕç, юлашки отчетпа суйлав пухăвĕнче ăна председатель пулма суйламарĕç.

Парти Уставĕ хушнă тăрăх, коммунистăн хăйĕн йăнăшне курма тата ăна йышăнма пултармалла. Ку партипе государство дисциплинине çирĕплетсе пынă çĕрте те питĕ кирлĕ, уйрăмах ертсе пыракан кадрсен çавна астумалла, мĕншĕн тесен ертсе пыракан работник хăйĕн йăнăшне курмасть пулсан тата ăна йышăнма пултараймасть пулсан, вара вăл тĕрĕс ертсе пырайми пулать.

Хамăрăн йăнăшсене уççăн критиклеме эпир шиксан та хăраман тата хăрамастпăр та, тенĕ Сталин юлташ партин XV-мĕш съездĕнче. Коммунистсен вăйĕ—критикăран хăраманнинче тата харпăр хăй çитменлĕхĕсене критикленинче. Критикăпа самокритика пирĕн партие аталантарса пыраççĕ, уйрăм çынсен çитменлĕхĕсене пĕтерме пулăшаççĕ. Критика партипе государство дисциплинине çирĕплетес ĕçре пысăк вырăн йышăнать. Анчах та уйрăм работниксем вĕсен çитменлĕхĕсене критикленĕшĕн кÿренеççĕ, хăйсен йăнăшĕсене йышăнмаççĕ, вĕсем йăнăшсене йышăннă пирки авторитет пĕтесрен хăраççĕ. Ку ĕнтĕ авторитет çинчен тĕрĕс ăнланманни пулать. Мыслец промкомбинатĕнчи парторганизаци секретарĕ Акилов юлташ, промкомбинат управляющийĕ Перов юлташ хăйсен çитменлĕхĕсене йышăнма хăюлăх çитереймерĕç. Вĕсем кăтартнă йăнăшсене йышăнасран пăрăнчĕç, çавăнпа та вĕсем промкомбинатра тек ĕçлеме пултараймарĕç.

Партипе государство дисциплинине çирĕплетессишĕн кĕрешнĕ çĕрте парти членĕсен идейăлла-политикăлла шайне ÿстерни пысăк вырăн йышăнать. Пирĕн районта парти, совет, хуçалăх кадрĕсен пысăк ушкăнĕ хăйсен политикăлла-идейăлла пĕлÿлĕхне кружоксенче, семинарсенче, политшкулсенче тата харпăр хăй тĕллĕн вĕренсе ÿстерет. Кружоксене ертсе пыма районти партипе совет активĕнчен тата районти интеллигенцирен 200 пропагандист тата консультант уйăрнă. Чылай коммунистсем, партире тăман кадрсем лайăх вĕренсе пычĕç. Хальхи вăхăтра иртерекен итоглă занятисем коммунистсем хăйсен пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе аван ĕçлесе пынине кăтартаççĕ.

XIX-мĕш съезд решенийĕсене пурнăçласа, КПСС Çĕмĕрле райкомĕ юлашки вăхăтра парти, совет тата хуçалăх органĕсенчи ертсе пыракан кадрсен дисциплинине чылай çирĕплетрĕ. Бюро ларăвĕсенче, пуçламăш организацисенче çак ыйтăва час-часах çĕклеççĕ. Ĕç дисциплини начар пирки «Комбайндеталь» завод плана тултарса пыраймастчĕ. Эпир кунти пуçламăш организацин партилле-организацилле ĕçĕ, политикăлла-массăлла ĕçĕ мĕнле пыни çинчен пленумра сÿтсе яврăмăр, унта пуçламăш организацин çитменлĕхĕсене кăтартса хăвартăмăр, çитменлĕхĕсене пĕтерме райкомран пулăшрăмăр, пленум решенине парторганизацин пухăвĕнче сÿтсе яврăмăр. Пуçламăш организаци хăйĕн пухăвĕнче пленум решенине тĕплĕн сÿтсе явса, партипе государство дисциплинине пăсакан юлташсене ятласа хăварчĕ, государство планне тултарассишĕн цехсенче социализмла ăмăртăва вăйлатрĕ. Юлашки вăхăтра завод уйăхри плансене ытлашшипех тултарса ĕçлеме пуçларĕ.

Партипе государство дисциплинине çирĕп тытса пырасси парторганизацисем вăл ĕçе асăрхаса тăнинчен нумай килет. Партипе государство дисциплинине мĕнле тытса пынине Сĕтел-пукан комбинатĕнчи, «Родина», «Победа», «Комбинат» колхозсенчи пуçламăш организацисенче асăрхасах тăраççĕ, çавăнпа та унта дисциплинăна пăсакансем çукпа пĕрех.

Анчах ку ĕçре пирĕн çитменлĕхсем нумай, вăл çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе эпир малашне те тăрăшса ĕçлĕпĕр.

М. КУЗЬМИН,
КПСС Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ.

КПСС Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕ

Кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйту тăрăх — «Калчасене пăхса ӳстерес, тырпул пухса кĕртме тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама хатĕрленес тĕлĕшпе Чăваш парторганизацийĕ умĕнче тăракан задачăсем» çинчен КПСС обкомĕн секретарĕ **Н. А. Шмаков** юлташ доклад турĕ.

Республикăри ялхуçалăх работникĕсем, терĕ докладчик, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçласа, çуракинче малтанхи çитĕнӳ турĕç. Кăçалхи çуракине нумай колхозсенче агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх вăхăтра, пысăк пахалăхпа ирттернĕ. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне çураки планне 97,7 процент, вăл шутра тулă акмалли плана 106,7 процент тултарнă. Колхозсемпе совхозсем выльăх апачĕлĕх культурăсем акмалли плана та ăнăçлă тултарчĕç.

Парти, совет тата ялхуçалăх органĕсен задачи çураки ĕçĕсене республикăри мĕнпур районсемпе колхозсенче çак кунсенче вĕçлесе çитермелле, государство планне пур культурăсем тăрăх та тултармалла тăвасси пулать.

Кăçалхи çуракинче машина-трактор станцийĕсем пысăк ĕç тунине палăртса, докладчик çапла калать: МТС механизаторĕсем тракторсемпе тухăçлăрах ĕçлеме пултарчĕç, çакă тракторсемпе ытларах çĕр ĕçĕ тума, çураки ĕçĕсене ытларах механизацилеме май пачĕ. Кунпа пĕрлех Шмаков юлташ нумай МТС-сен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулнине палăртать. Çавăн пирки МТС-сем тракторсемпе тумалли уйрăм ĕçсем енĕпе плана питех те çителĕксĕр тултараççĕ. Ку вăл тракторсемпе пĕр смена кăна ĕçленинчен, нумай трактористсем сменăри нормăна тултарайманнинчен, тракторсем ĕçлемесĕр тăни пулнинчен килет.

Партипе совет организацийĕсен пĕрремĕш тивĕçĕ машина-трактор станцийĕсен ĕçĕсене лайăхлатасси, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетес ĕçре вĕсен пĕлтерĕшне ӳстересси, МТС техникипе туллин усă курса ĕçлемелле тăвасси пулать.

Сĕртме сухи тăвасси çинчен каласа, докладчик ку тĕлĕшпе Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри, Шăхасан, Канаш тата Муркаш районĕсенчи колхозсем кая юлса пынине палăртать.

Правительство планĕ тăрăх, пирĕн республикăра сĕртме сухине июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне туса пĕтермелле. Пирĕн задача çакăн пек пулать: сĕртме сухи планне правительство кăтартса панă срок тĕлне туса пĕтермелле, тăпран сухалакан сийне тарăнлатса пымалла, уй-хире тислĕк кăлармалла.

Калчасене пăхса ӳстересси ялхуçалăх культурисен тухăçне ӳстерес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать, тет докладчик. Анчах та республикăри чылай районсенче калчасене пăхса ӳстерессине хакламасçĕ. Иртнĕ çул ку ĕçе уйрăмах Октябрьски, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле, Тăвай районĕсенчи колхозсенче ытла та çителĕксĕр турĕç. Çавăн пирки асăннă районсенчи колхозсем гектар пуçне пурĕ те 45—63-шер центнер кăна тымарçимĕç туса илнĕ. 1952 çулта йĕтĕн акса тăвакан районсенчи, уйрăмах Улатăр, Пăрачкав, Кувакино районĕсенчи колхозсенче те ĕçсем çавăн пекех пулнă. Парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем çак паха культурăсене хакламаннипе килĕшсе тăраççĕ.

Партипе совет организацийĕсен, ялхуçалăх органĕсен, иртнĕ çулхи уроксенчен тивĕçлĕ выводсем туса, калчасене пăхса ӳстерес тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене тумалла. Кашни колхозра калчасене çумкурăксенчен вăхăтра тасатмалла, рет хушшисене кăпкалатса тăмалла, калчасене апат памалла. Уйрăмах тымарçимĕçсене, йĕтĕн-кантăра, махоркăна лайăх пăхса çитĕнтермелле. Çак ĕçсене туса ирттерме мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, çамрăксене те хутшăнтарас пулать. 1953 çулта çак культурăсен тухăçне ӳстерес тĕлĕшпе мĕн тумаллине пĕтĕмпех пурнăçламалла. Докладчик партипе совет организацийĕсен уйрăмах вăрлăх участокĕнчи ĕçсене тĕплĕ организацилеме кирли çинчен, колхозсенче вăрлăх акса тăвас пĕтĕм ĕçе лайăхлатмалли çинчен асăрхаттарать.

Шмаков юлташ тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсем çинчен тĕплĕн калать.

Тырпул пухса кĕртесси тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парса татасси, тет вăл, ялхуçалăх çулне вĕçлесе çитерекен тапхăр пулса тăрать. Вăл социализмла ялхуçалăх ĕçченĕсем вăйлă тырпулшăн вăя шеллемесĕр кĕрешнин ăнăçлăхне татса парать. Вăл партипе совет организацийĕсем, ялхуçалăхĕпе хатĕрлев органĕсем ялхуçалăхне малалла вăйлатас тĕлĕшпе ĕçленин итогнĕ туни пулать.

Çавăнпа та тырпула кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртмелле тăвасси, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем срокчен парса татмалла тăвасси парти организацийĕсен ĕçĕнче тĕп вырăнта тăмалла.

Малалла Шмаков юлташ, партипе совет тата ялхуçалăх организацийĕсем иртнĕ çулта тырпул пухса кĕртме хатĕрленес ĕçре пысăк çитменлĕхсемпе йăнăшсем туни çинчен каласа, нумай райкомсемпе райисполкомсем, Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви тата унăн вырăнти органĕсем, çавăн пекех нумай МТС-семпе колхозсен руководителĕсем иртнĕ çулхи уроксенчен кирлĕ пек выводсем туман, иртнĕ çулхи йăнăшсене тепĕр хут тăваççĕ, тесе палăртать.

Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри МТС-сенче комбайнсем юсамалли плана пурĕ те 24,6 процент кăна тултарнă. Вăл шутран, тĕпрен юсамалли плана 9,8 процент çеç пурнăçланă. Комбайнсем юсас тĕлĕшпе уйрăмах Канаш, Вăрмар, Сурмайдан, Шăхасан МТС-ĕсем юлса пыраççĕ. Вĕсем комбайнсем юсамалли плана 5—6 процент кăна тултарнă.

Нумай МТС-семпе колхозсенче тырпул пухса кĕртмелли ытти машинăсене, молотилкăсене, сортировкăсене юсас, витнĕ итемсемпе сушилкăсене юсас тата çĕнĕрен тăвас ĕç ытла та çителĕксĕр пулса пырать. Çак ĕçсем уйрăмах Йĕпрес, Куславкка, Ишлей, Сĕнтĕрвăрри тата Октябрьски районĕсенчи МТС-семпе колхозсенче çителĕксĕр пулса пыраççĕ.

Облаçри парторганизаци задачи МТС-семпе колхозсем тырпул пухса кĕртмелли машинăсене юсас ĕçре юлса пынине пĕтересси пулать. Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин, унăн вырăнти органĕсен, партипе совет организацийĕсен, МТС-семпе колхозсен руководителĕсен тырпул пухса кĕртме тухиччен МТС-семпе колхозсенчи тырпул пухса кĕртмелли машинăсене юсаса çитерме халех кирлĕ ĕçсем тумалла. Юсав ĕçĕн пахалăхĕ çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла.

Çакăнпа пĕрлех автотракторосбытăн республикăри кантурĕн (Кривоногов юлташ), ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин материально-технически снабжени управленийĕн (Костин юлташ) ответлăхне ӳстермелле. Вĕсем МТС-семпе колхозсене машинăсемпе запаслă пайсем вăхăтра кӳрсе парассишĕн ответлă.

Республикăри колхозсенче кантăр, йĕтĕн, çĕрулми, пахча çимĕç, махорка ытларах акни, çавăн пекех нумай çул ӳсекен курăксем нумайрах акни 1953 çулта тырпул пухса кĕртес ĕçе чылай пысăклатать. Пирĕн задача çак культурăсене пухса кĕртессине пур майсемпе те механизацилесе пырасси пулать.

Республикăри колхозсенче кăçал комбайнсемпе 200 пин гектар çинчи тырпула пухса кĕртмелле. Ку вăл, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 1,7 хут нумайрах. Улатăр, Кувакино, Пăрачкав, Шăмăршă районĕсенче тĕштырăсене 60—80 процент таран комбайнсемпе пухса кĕртмелле пулать.

Çаксем пурте партипе совет организацийĕсене, ялхуçалăх органĕсене, МТС-семпе колхозсен руководителĕсене комбайнсемпе тырпул пухса кĕртес ĕçе организацилесси çине, комбайнсемпе тухăçларах ĕçлемелле тăвасси çине уйрăмах тимлĕн пăхма хушать.

Комбайнсемпе ĕçлеме лайăх участоксем уйăрса парасси, комбайн агрегачĕсенче ĕçлеме пултаруллă çынсене уйăрасси, вырса пулнă тата вăйлă пулнă тырпула пухса кĕртме ятарласа хатĕрсем тăвасси, комбайнсем çинчен тырпула ĕçленĕ вăхăтрах пушатса пымалла тăвасси, комбайнсем çине тырă тасатмалли çĕнĕ йышши оборудовани вырнаçтарса ларттарасси — çак ĕçсем пурте партипе совет организацийĕсен тата çĕрĕç органĕсен ĕçĕнче тĕп вырăнта тăмалла.

Республикăри нумай МТС-сенче техника çителĕклĕ пулнă май, тет малалла докладчик, кăçалхи çул тырпула поток йĕркипе пухса кĕртме тытăнмалла. Ку вăл акă мĕне пĕлтерет: комбайн уй-хирте пĕр талăк хушшинче тунă пĕтĕм ĕçе çав талăк хушшинче вĕçлесе çитермелле; вырса çапнă тырра çав кунах тасатмалла, типĕтмелле, висмелле, государство складне леçмелле е колхоз складне хумалла; уй-хире арпа-улăмран тасатмалла; тырă вырса пухнипе пĕрлех хăмăла сухаласа пăрахмалла.

Малалла Шмаков юлташ итем çинче тырă тасатас ĕçе механизацилесси, комбайнпа вырса пухнă хыççăн уй-хирти улăмпа арпана пухса илес тата капапа хывас ĕçе механизацилесси çинчен, колхозсенче тырă типĕтмелли хатĕрсене вăхăтра йĕркелесе çитерме кирли, комбайнсен агрегачĕсемпе ытти агрегатсем валли квалификациллĕ кадрсем тупса çитересси çинчен, тырпул пухса кĕртмелли мĕнпур машинăсемпе тата колхозсенчи ĕç вăйĕпе тухăçлă усă курасси çинчен калать.

Государствăна тырă памалли плана вăхăтра тултарасси колхозсемпе колхозниксен пĕрремĕш тивĕçĕ пулса тăрать. Çавăнпа та партипе совет организацийĕсен, ялхуçалăх органĕсен, колхозсемпе МТС руководителĕсен авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕç çине тырпул пухса кĕртес ĕçсем пуçлансан малтанхи кунсенчех питĕ тимлĕн пăхмалла. Авăн çапас ĕçре МТС-семпе колхозсен молотилкисемпе тĕрĕс тата тухăçлă усă курмалла, «МК-1100» сложнăй молотилкăсене талăкĕпех ĕçлеттермелле, авăн çапнă чухне нумай çын тумалли ĕçсене механизацилемелле.

Хатĕрлев пункчĕсене татти-сыпписĕр тырă турттарса тăма колхозсенче пуриншче те транспорт бригадисем тумалла, бригадăсене ертсе пыма чи лайăх колхозниксене уйăрса лартмалла. Транспорт бригадисем валли график туса, государствăна тырă парас ĕçе кашни колхоз куллен хутшăнмалла тăвас пулать.

Пирĕн республикăри ялхуçалăх ĕçченĕсем, тăванла виçĕ республика хушшинчи социализмла ăмăртăва хутшăнса, государствăна тырă памалли плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма сăмах пачĕç. Çак обязательствăна чыслăн пурнăçлама республикăри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсем, мĕнпур ялхуçалăх работникĕсем тăрăшса ĕçлени кирлĕ.

Тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсем, тет малалла докладчик, колхозсенче вăраха хăварма юраман ытти нумай ĕçсемпе пĕр вăхăтра килеççĕ. Çавăнпа та ку тапхăрта питĕ организованно ĕçлемелле, МТС-сен мĕнпур материально-техникăлла хатĕрĕсемпе, колхозсенчи ĕç вăйĕпе туллин усă курмалла. Çакна тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсене туса ирттерме тĕплĕн хатĕрленĕ план пулсан çеç ăнăçлă туса пыма пулать. Тырпул пухса кĕртес ĕç пуçланиччен кашни колхоз, кашни МТС ĕç планĕ туса хатĕрлемелле.

Хатĕрлев пункчĕсем тырă йышăнма мĕнле хатĕрленни çинчен каласа, Шмаков юлташ хатĕрлев организацийĕсен руководителĕсем пĕлтĕрхи йăнăшсене кăçал та тунине палăртать. Республикăра çĕнĕ складсем тăвас ĕç япăх пырать. Складсене тĕпрен юсамалли плана вăхăтра пурнăçласа пымаççĕ. Зернохранилищĕсене юсас, электродвигательсене, сушилкăсене, тарăсене, инвентарьпе оборудование юсаса хатĕрлес тата автомобиль транспортне тырă турттарма хатĕрлес ĕçсенче çитменлĕхсем нумай. Хăшпĕр пунктсенче складсем патне пымалли çулсене юсамаççĕ.

Парти райкомĕсен, райисполкомсен, «Заготзерно» пункчĕсенче ĕçлекенсен техникăлла база хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле, хатĕрлев пункчĕсене çĕнĕ тырă йышăнма тĕплĕн хатĕрлесе çитермелле. Тырă хатĕрленĕ вăхăтра «Заготзерно» пункчĕсене лайăх ĕçлеттермелле, хатĕрленĕ тырра тĕрĕс вырнаçтармалла тата пĕр тăккаламасăр сыхласа усрамалла.

Çакăнпа пĕрлех партипе совет организацийĕсен, ялхуçалăх органĕсемпе хатĕрлев органĕсен колхозниксене ытти ялхуçалăх продукчĕсем тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлемелли плана вăхăтра пурнăçлама мобилизацилемелле.

Малалла Шмаков юлташ колхозсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен калать. Выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстермелли плана çителĕксĕр тултарса пыни, выльăхсен тухăçлăхĕ пысăк мар пулни çинчен каласа, докладчик республикăри нумай колхозсенче выльăхсем валли паха ăратсем тата лайăх витесем çителĕксĕр пулни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри чи пысăк чăрмав пулса тăнине кăтартса парать.

Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин тата унăн вырăнти органĕсен КПСС райкомĕсемпе райисполкомсен, МТС-семпе колхозсен руководителĕсен пысăк задачи выльăх апачĕ хатĕрлемелли çирĕп никĕс тăвас ĕçе пĕтĕм халăха хутшăнтарасси пулать. Кăçал утă çулас тата силос хывас ĕçсене вăхăтра тата йĕркеллĕ туса ирттермелле, выльăх апачĕ хатĕрлемелли плана тултарма мĕн кирлине пĕтĕмпех тумалла. Утă çулса пухас ĕçе тырă вырма тухиччен вĕçлесе çитермелле. Çавăнпа пĕр вăхăтрах выльăх витисем тăвас, уйрăмах кивĕ витесене юсас ĕçсене вăйлă сарса ямалла, çак ĕçсене октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса çитермелле.

Шмаков юлташ хăйĕн докладĕнче колхозсемпе МТС-сенчи парторганизацисен ĕçне лайăхлатасси, ялта партилле-политикăлла ĕçе вăйлатасси, социализмла ăмăртăва лайăхрах ертсе пырасси çинчен нумай калать.

Партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисем, çавăн пекех партипе правительство юлашки вăхăтра туса ирттернĕ ĕçсем республикăри ялхуçалăх ĕçченĕсен политикăлла активлăхне тата ĕçри хастарлăхне нумай ĕçклерĕç. Вĕсен активлăхне ӳстерме кăçал вăйлă тырпул çитĕнтермелли условисем лайăх пулни те нумай пулăшать.

Парти организацийĕсен, ялхуçалăх ĕçченĕсен активлăхĕ ӳснине çирĕплетсе хăварса, ялта политикăлла ĕçе малалла вăйлатса пымалла, колхозниксен, МТС работникĕсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен активлăхне тата ытларах ӳстермелле, колхоз ялĕн пĕтĕм вăйне ялхуçалăхне малалла ĕçклес задачăна ăнăçлă пурнăçлас ĕçе пăхăнтармалла.

Докладчик ялти политикăлла ĕçĕн анлăшĕ тата унăн содержанийĕ партин XIX-мĕш съезчĕ хушнисене тивĕçтерейменнипе тата колхозниксемпе колхозницăсен ӳссе пыракан ыйтăвĕсенчен юлса пынине палăртать. Политикăлла ĕçри тĕп çитменлĕх нумай парторганизацисем ăна кампанилле, час-часах пурнăçпа, хуçалăхла-политикăлла задачăсемпе çыхăнтармасăр туса пыни пулать.

Пирĕн ялти пĕтĕм политикăлла ĕç идея тĕлĕшĕнчен çӳлти пусăмра тата конкретлă пулмалла, вăл ялти ĕçченсене калчасене пăхса ӳстерес, тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçсене лайăх туса пыма, обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ хатĕрлеме, выльăхсене хĕле лайăх хатĕрлеме, Мари тата Мордва республикисемпе социализмла ăмăртăва тухса илнĕ обязательствăсене ăнăçлă пурнăçлама хавхалантармалла.

Парти массăсем хушшинчи политикăлла ĕçе хальхи вăхăтра партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисем, Маленков, Берия, Молотов юлташсем кăçалхи мартăн 9-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре каланă сăмахсем, СССР Верховнăй Совечĕн IV-мĕш сессийĕ йышăннă решенисем тăрăх туса пымалла, вĕсенче пирĕн партин политикине питех те уççăн каласа панă.

Малалла докладчик парти, совет, ялхуçалăх органĕсем социализмла ăмăртăва çителĕксĕр ертсе пыни çинчен, çавна пула пирĕн республика кăçал ялхуçалăхĕнчи чылай ĕçсем енĕпе пиренпе ăмăртакан тăванла республикăсенчен юлса пыни çинчен калать.

Колхозниксемпе механизаторсене виçĕ республика хушшинчи ăмăрту çинчен яланах астутарса тăмалла, вĕсене республика, район, колхоз хăйĕн обязательствисене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен яланах пĕлтерсе пымалла, ăмăртура малта пыракансене палăртмалла, кая юлакансене малтисемпе танлашма пулăшмалла.

Ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсен социализмла ăмăртăвне анлăн организацилес тĕлĕшпе пичет — республикăри тата районсенчи хаçатсем, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем ытларах ĕçлемелле.

Массăлла-политикăлла ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе культурăпа çутĕç учрежденийĕсем, кино тата радио пысăк вырăн йышăнмалла. Анчах та çак майсемпе халĕ питех те çителĕксĕр усă кураççĕ. Массăсене политикăлла влияни памалли çак паха майсемпе усă курассине лайăхлатса пырас пулать.

Массăлла-политикăлла ĕçĕн центрĕ колхозри производство бригади тата трактор бригади пулмалла, агитаторсемпе пропагандистсен вырăнĕ колхозниксем ĕçленĕ çĕрте, вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешӳ ăнăçлăхне татса панă çĕрте, пулмалла. Вĕсем хĕрӳллĕ сăмахсемпе колхозлă ял ĕçченĕсене хастарлă ĕçлеме, кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерме мобилизацилеме тивĕç.

Юлашкинчен Шмаков юлташ ялхуçалăхне ертсе пырас тĕлĕшпе парти обкомĕпе республикăн Министрсен Совечĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулни çинчен калать. Обком бюровĕпе Министрсен Совечĕ ялхуçалăхĕпе хатĕрлев органĕсен ĕçне лайăхлатма кирлĕ ĕçсене туман. Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Заикин юлташ, ялхуçалăх ĕçĕсене ертсе пыма тивĕçлĕ çын, колхоз производствин чылай пысăк ыйтăвĕсене татса парас ĕçе кирлĕ пек оперативлă туса пыман.

Колхозсемпе МТС-сенчи парти организацийĕсен ĕçĕнче, уйрăммăн илсен, ялти политикăлла ĕçре пысăк çитменлĕхсем пулнишĕн КПСС обкомĕн партипе профсоюз тата комсомол органĕсен, пропагандăпа агитаци тата ялхуçалăх пайĕсем айăплă. Çак пайсем колхозсенчи парторганизацисен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе парти райкомĕсене халĕ те кирлĕ таран пулăшу памаççĕ-ха.

Малалла докладчик Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин тата унăн вырăнсенчи органĕсен ĕçне лайăхлатма кирли çинчен калать. Çак аппарата кадрсемпе çирĕплетесси, ăна çĕр ĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн культурине ӳстерес, колхозсен обществăлла хуçалăхне пур енĕпе те малалла аталантарас тĕлĕшпе тăракан задачăсене татса парассишĕн оперативлă та пултаруллă ĕçлекен тăвасси — парти обкомĕн бюровĕн, республикăри Министрсен Совечĕн тата КПСС райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен пĕрремĕш обязанноçĕ пулать.

Кадрсене суйласа илес тата вĕсене воспитани парас ĕçе пур майсемпе те лайăхлатса пырса, парти райкомĕсем пуринчен малтан ялхуçалăх органĕсенче тата МТС-сенче ĕçлекенсен ответлăхне вăйлатма тивĕçлĕ, çав никĕс çинче вара ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлă татса памалла тăвас пулать.

* * *

Шмаков юлташ доклачĕ тăрăх прениресчи малтан Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министрĕ **Мартынов** юлташ тухса каларĕ. Вăл тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăхĕпе хатĕрлев органĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен каларĕ.

МТС-семпе колхозсем, тет вăл, тырпул пухса кĕртме хатĕрленсе çитеймен-ха. Комбайнсене тата ытти ялхуçалăх машинисене ытла та вăраххăн юсаççĕ. Чылай МТС-сен (сăмахран, Чкаловски, Шăмăршă, Вăрнар МТС-сен) руководителĕсем, юсав ĕçĕсене тĕрĕс йĕркелес вырăнне, тĕрĕс мар çул çине тăнă, вĕсем хăйсен отчечĕсенче юсаман комбайнсене те юсанă тесе кăтартса панă. Çавăн пек фактсене татăклăн пĕтерес пулать, МТС-семпе колхозсен машинисене тырпул пухса кĕртме хатĕрлес ĕçе тимлĕн туса пырас пулать.

Ялхуçалăх министерствине çĕнĕлле йĕркеленĕ май, ялхуçалăхĕпе хатĕрлев органĕсен ĕçне татăклăн лайăхлатас пулать. Чи малтанах çак органсене ялхуçалăхне пĕлекен, хушнă ĕçе ăнăçлă туса пыма пултаракан кадрсемпе çирĕплетни кирлĕ.

Малалла Мартынов юлташ парти обкомĕпе хăшпĕр районсенчи ертсе пыракан органсем ялхуçалăх кадрĕсене ĕçе вырнаçтарса воспитани парас тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем туни çинчен калать. Хĕрлĕ Чутай райсовет исполкомĕ пĕр ларура ялхуçалăх специалисчĕсене пилĕк çынна хытă ятланă, çакă вăл çынсене тĕрĕс воспитани пани пулать-и вара? Районсенчи ертсе пыракан хăшпĕр работниксем специалистсене кăхалсем, ĕçсĕр аптракансем тесе тата ытти кӳрентерекен сăмахсемпе ятлаççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах партин Пăрачкав райкомĕн работникĕсене, Куславкка райсовет исполкомĕн председательне Смыков юлташа палăртса хăвармалла.

Хăшпĕр районсенче ялхуçалăх специалисчĕсене ĕçлеме условисем туса памаççĕ. Çавна пула Шăмăршă, Куславкка тата Шупашкар районĕсенче çамрăк специалистсем ĕçрен тухса кайни пулнă.

Специалистсем çине çавнашкал пăхнине пĕтерес пулать. Вĕсене ăнăçлă ĕçлеме условисем туса памалла, воспитани ĕçне чăтăмлăн туса пыни, ялхуçалăх производствин культурине ӳстерес тĕлĕшпе вĕсен ответлăхне ӳстерни кирлĕ.

Парти обкомĕ, Ялхуçалăх министерствине пĕлтермесĕрех, Сельэлектрон Чăваш республикинчи кантурĕн директорне Белов юлташа промышленноçра ĕçлеме куçарнă. Эпĕ çапла шутлатăп: ку ĕçе парти обкомĕ тата уйрăммăн илсен, Шмаков юлташ тĕрĕс мар тунă, вĕсем кадрсене суйласа илмелли партилле принципа пăснă.

Сельэлектрора çур çул хушши ĕнтĕ директор çук, çавна пула вырăнсенче гидроэлектростанцисем тăвасси çителĕклĕ пулса пымасть. Ялхуçалăх кадрĕсене çирĕплетес ĕç çине çавнашкал пăхнине пĕтерес пулать.

Чăваш республикинчи селекци станцийĕн директорĕ **Лукьяненко** юлташ Шмаков юлташа хăйĕн докладĕнче çĕр ĕçĕн культурине ӳстерес, уйрăммăн илсен, тăпра пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе тĕп ыйтусем çинчен каламаншăн критиклерĕ.

Тăпра пахалăхне лайăхлатас тесен, тет оратор, чи малтанах хире тислĕк, органически тата минераллă удобренисем кăларас пулать, йӳçек тăпрана извĕçлес пулать. Унсăрăн вăйлă тырпул туса илесси çинчен шухăшлама та çук. Тăпра пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешесси пирĕн республикăри çĕрĕçĕнче тĕп вырăн йышăнса тăнине пирĕн хăшпĕр юлташсем халĕ те ăнланса илеймен-ха.

Малалла Лукьяненко юлташ выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлемелли çирĕп никĕс тăвасси çинчен калать.

Выльăх апачĕ çинчен эпир кашни çулах калаçатпăр, тет оратор, анчах ку тĕлĕшпе сахал ĕçлетпĕр-ха. Çакăншăн чи малтанах парти обкомĕ айăплă. Пирĕн станци выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес задачăна ăнăçлăн татса пачĕ, анчах çак опыта колхоз производствинче мĕншĕн сармаççĕ-ха?

Выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлемелли çирĕп никĕс тăвас тесен, колхозсенче выльăх апачĕлĕх культурăсем акмалли лаптăка ӳстермелле. Çĕрпӳпе Красноармейски районĕсенчи хăшпĕр колхозсенче выльăх апачĕлĕх культурăсене акмалли пĕтĕм лаптăкăн 6—8 процентĕ çинче туса илеççĕ пулсан, выльăх апачĕн никĕсĕ çинчен калама пулать-и-ха? Курăксем акмалли пусă çаврăнăшĕсене хăвăртрах пурнăçламалла, выльăхсене çитерме сĕртме пуссине ырашпа ытти культурăсем ытларах акмалла.

Чăваш АССР Вырăнти промышленность министрĕ **Бобров** юлташ колхозсемпе совхозсенче тарасасене юсаса хатĕрлесси тата колхозсем валли тимĕрпе тыттарнă урапасем туса кăларасси çинчен каларĕ.

Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министрĕн заместителĕ **Федотов** юлташ колхозсенчи автотранспортпа тата чĕрĕ туртăм вăйĕпе государство валли тырă турттарас ĕçре туллин усă курма кирлине, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕç çине тимлĕ пăхма кирлине палăртать.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ **Заикин** юлташ çапла калать: республикăри колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç юлса пыни пуринчен ытла апат çитменнинчен килнĕ. Çак ĕçри пысăк çитменлĕхсем, тĕпрен илсен, Министрсен Совечĕ çителĕклĕ таран оперативлă пулманнинчен, эпĕ хамăн ĕçре, çавăн пекех парти обкомĕн бюровĕ çитменлĕхсем тунинчен килнĕ. Выльăх апачĕн çирĕп никĕсне тăвас ĕçри малта пыракан опыта колхоз производствинче сарас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнман.

Малалла Заикин юлташ государство фондне кĕрекен вăрмансенче колхозсен хăйсене уйăрса панă çарансемпе туллин усă курмаллине, утă çулса пухас ĕçе вăхăтра тата йĕркеллĕ туса ирттерме кирлине палăртать, çапла вара хĕл вăхăчĕ валли апат запасне çителĕклĕ туса хумалла. Заикин юлташ выльăх апачĕн никĕсне тăвас ĕçри малта пыракан опыта ĕçе анлăн кĕртсе пыма чĕнет.

Элĕк райсовет исполкомĕн председателĕ **Ярдухин** юлташ минераллă удобренисем уйăрса парас ĕçе тĕрĕс йĕркелеме кирли çинчен ыйту лартать. Чугун çултан инçетре пулнă пирки, тет вăл, пирĕн районти колхозсем час-часах минераллă удобренисемсĕр тăрса юлаççĕ.

Кăçал, тет малалла оратор, пирĕн районта кантăр акмалли лаптăк чылай ӳсрĕ, анчах çак культурăна пухса кĕртес тата ăна çапас ĕçсене механизацилесси япăх пырать. Кантăр пухса кĕртмелли машинăсем кӳрсе килесех пулать.

Малалла Ярдухин юлташ Етĕрнери хатĕрлев пунктĕнче пĕлтĕр пулнă çитменлĕхсем çинчен калать. Унта çакăн пек ĕçсем те пулса иртнĕ: хăшпĕр кунсенче кăнтăрлаччен ыраш йышăннă, кăнтăрла иртсен — пăрçа. Тырпул хатĕрлемелли плана хăвăртрах тултарма çакă чăрмантарса пынă.

Симĕс конвейер тăвас ĕçри малта пыракансен опытне вĕренес тĕлĕшпе эпир 1952 çулта районтан Чăвашсен селекци станцине тата Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоза экскурсине ятăмăр. Çакă вырăнлă пулчĕ: районти чылай колхозсенче халĕ симĕс конвейер тунă.

Чылай районсенчи партипе совет тата ялхуçалăх органĕсем, тет Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министрĕн заместителĕ **Захаров** юлташ, çуллахи вăхăтра выльăхсене кĕтӳре çӳретмесĕр пăхса усрас ĕçе организацилес тĕлĕшпе тивĕçлипе ĕçлемеççĕ, выльăхсене валли симĕс апат тума акнă ыраша тĕштырă тумашкăн хăварма пăхакан уйрăм колхоз руководителĕсен кая юлнă, сиенлĕ шухăшĕсемпе килĕшсе лараççĕ. Çапла, Тăвай районĕнче çакна валли ыраш 15 колхозра акнă, анчах пысăках мар лаптăксем çинчи ырашпа ĕнесене тăрантарма икĕ колхозра çеç усă кураççĕ.

Выльăхсене тăрантарма симĕс ырашпа тĕрĕс усă курасси çинчен колхоз руководителĕсене ăнлантарса парас пулать.

КПСС Элчĕк райком секретарĕ **Алексеев** юлташ кăçалхи çуракине ирттерни çинчен тĕплĕн каласа парать, унтан район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе юлса пынине палăртать. Выльăх витисем тума йывăç материалсем çукки пысăк чăрмав пулса тăрать. Кăçалхи çул валли йывăç касма панă фонд, вырăнти строй материалпа—саманпа çителĕклипех усă курсан та, колхозсен ыйтăвне ниепле те тивĕçтерейместь. Алексеев юлташ йывăç касмалли фонда хушса пама ыйтать.

Районти колхозсене транспорт инвентарĕ питĕ кирлĕ, анчах ăна туса кăларас тĕлĕшпе никам та ĕçлемест. Ку ĕçе райпромкомбинат ăнăçлăнах тума пултармалла, анчах вăл йывăç çуккипе ĕçе тытăнаймасть. Çакна валли эпир Чăваш АССР Госпланĕнчен юман йывăç уйăрса пама ыйтрăмăр, анчах вăл пирĕн ыйтăва тивĕçтермерĕ.

Канаша каймалли çул çинче, Чутей ялĕ патĕнче (Тутар республикинче), Кĕтне çырми урлă каçмалли пысăк кĕпер пур, тет оратор малалла. Çав кĕпер яланах юсавсăр. Çавăн пирки пирĕн районти колхозсен 50 километр тавра çаврăнса çӳремелле килет. Ку ыйтăва татса пама республикăри Министрсен Совечĕн пире пулăшас пулать.

Районта кантăр акмалли лаптăк ӳснĕ май, тет Алексеев юлташ, кантăр завочĕ лартас ыйту тухса тăрать. Вăл малалла районта иккĕмĕш МТС организацилесси çинчен ыйту лартать, мĕншĕн тесен хальхи МТС, районти колхозсен пĕр пайĕ инçетре пирки, хăйĕн тракторĕсемпе тухăçлă ĕçлеймест.

Чăваш АССР Сывлăха сыхлас ĕçĕн министрĕ **Ефимова** юлташ вырăнти партипе совет органĕсен тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра хĕрарăмсене ĕçлеме кирлĕ условисем туса пама кирли çинчен калать. Колхозсенче вăхăтлăха ĕçлекен ача учрежденийĕсем уçмалла. Çак кирлĕ ĕç иртнĕ çулсенче çителĕклĕ пулса пыман. Сăмахран, ача яслисемпе площадкисем организацилемелли плана пĕлтĕр 35 процент çеç тултарнă. Ку ĕнтĕ çак ĕçе хакламанни çинчен калать.

Чăвашпотребсоюз правленийĕн председателĕ **Балашов** юлташ пĕлтĕр çĕрулмипе пахча çимĕçсем хатĕрлес ĕçре потребкооперации системин ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулнине палăртать. Ку ĕçри пысăк çитменлĕхсенчен пĕри çакă пулнă: хăшпĕр районсенче потребкооперации работникĕсене колхозсенчен çĕрулмине сохраннăй распискăсемпе йышăнтарнă та квитанцисем çырса пама хушнă. Çапла, чăннипе каласан, государствăна хирĕçле ĕç туни Пăрачкавпа Çĕрпӳ районĕсенче пулнă. Кайран çав çĕрулмипе колхозсем хăйсемех лартма усă курнă е ытти çĕре расходланă.

Çакăн çинчен райисполкомсен председателĕсем пĕлсе тăнă, анчах вĕсем потребкооперацинче ĕçлекенсене çав çĕрулмине колхозсенчен илме пулăшман, çапла майпа çав колхоз председателĕсене государствăна улталама май туса панă.

Малалла Балашов юлташ партин облаçри XXIV-мĕш конференцийĕ хуласем сывăхĕнче çĕрулмипе пахча çимĕç бази тăвасси çинчен йышăннă решение тата Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ ир пулакан пахча çимĕçпе çĕрулми лартса ӳстересси çинчен йышăннă постановлени çав тери начар пурнăçлани çинчен калать. Улатăр районĕнчи нумай колхозсем парниксенче махорка калчи çеç ӳстереççĕ. Райисполком чылай кая юлса, апрелĕн 11-мĕшĕнче тин ир пулакан пахча çимĕçсем лартса ӳстересси çинчен решени йышăннă.

Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви, райисполкомсем, Министрсен Совечĕ сăмахран практикăлла ĕçе куçни—пысăк хуласем тавра çĕрулмипе пахча çимĕç базисем тăвас ыйтăва тимлесе татса пани кирлĕ. Парти обком бюровĕн çак задачăна мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăрассине вăйлатмалла.

КПСС Йĕпрес райкомĕн секретарĕ **Багров** юлташ парти обкомне тата Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, критиклерĕ. Обком секретарĕ Шмаков юлташ, обкомăн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ Ерлаков юлташ тата министр Мартынов юлташ, тет оратор, ялхуçалăх ыйтăвĕсем тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, районсенче сахал пулаççĕ тата районсене уйрăммăн ертсе пырассине пурнăçа кĕртмеççĕ. Пирĕн районта çак юлташсенчен пĕри те пулман.

Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин специалисчĕсем тата Чăваш ялхуçалăх институчĕн наука работникĕсем колхоз производствинче малта пыракансен опычĕпе анлăн усă курма, колхозсенче агрономи кăтартăвĕсене пурнăçлама районсене çителĕксĕр пулăшаççĕ.

Пирĕн районта татса паман ыйтусем нумай. Вĕсене час-часах вырăнти работниксем татса пама пултараймаççĕ. Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви тата парти обкомĕ енчен квалификациллĕ пулăшу кирлĕ. Колхозсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатма чи малтан парти обкомĕнчен тата Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствинчен тытăнас пулать.

КПСС обкомĕн парти, профсоюз тата комсомол органĕсен пайĕн заведующийĕн заместителĕ **Старухин** юлташ колхозсенче производство планĕсене тунă чухнехи пысăк çитменлĕхсем çинчен каларĕ. Чылай районсенчи парти организацийĕсем тата ялхуçалăх органĕсем план тăвас ĕçе контроль туса пыманнине пула, нумай колхозсенче производство планĕсене тĕрĕс тумаççĕ. План тунă чухне пур резервсене те çителĕклĕ шута илмеççĕ.

Малалла вăл МТС-сен организаторлăхне тата вĕсен руководителĕсем хăйсене шанса панă ĕçшĕн ответлă пулассине ӳстерме кирлине кăтартса парать.

Сӳтсе явнă ыйту тăрăх пленум анлă решени йышăнчĕ.

Критикăпа библиографи

„Тăвата кун"

Хăйĕн «Тăвата кун»*) повеçĕнче Н. Ильбек, пĕр енчен, Совет Çарĕ «халăхсене ирĕке кăларас асăл миссие» мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине, тепĕр енчен, совет çынни капитализмла обществăра пурăнакан кирек мĕнле çынтан та нумай çӳлте тăнине, культурăллă пулнине кăтартса парас тĕллев лартнă. Паллах, писатель çакнашкал темăсем çуйласа илни—кирлĕ, пархатарлă ĕç.

Повеçри ĕçсем тӳрремĕнех вăрçă хирĕнче мар, Совет Çарĕн подразделенийĕ вăхăтлăха (тăвата кунлăха) чарăннă румынсен пĕр ялĕнче пулса иртеççĕ.

Пирĕннисем çитиччен темиçе кун малтан ку яла совет воинĕсен формине тăхăннă фашистсен пĕр ушкăнĕ кĕрсе тухса кайнă. Вĕсем хăйсене «эпир коммунистсем» тенĕ, яла вут тĕртсе çунтарнă, нумайăшне вĕлернĕ, хĕненĕ, çаратнă, çамрăк хĕрарăмсене мăшкăлланă. Çапла туса, фашистсем вырăнти халăха Совет çарне хирĕç кĕрешме çĕклесшĕн пулнă.

Акă, пирĕн воинсем яла çывхарса пыраççĕ. Çул хĕрринче пыракан ватă румына унăн ывăлĕн хĕрачи, вĕсене курсан, лавне, вăкăрне пăрахса хăварсах тарма тытăнаççĕ. Анчах совет офицерĕ вĕсене тытса чарать. Сехри хăпнă старик темле шарт сикнĕ чухнехи пек сасăпа:

«— Эсир... мĕн-и, Советсем мар-и? — тесе ыйтать.

— Советсем.

— Большевиксем мар-тăр?

— Большевиксем, — тетĕп эпĕ ăна.

Старик малтанласа хăраса ӳкет.

— Акă манăн каруççăм (урапа, лав), акă вăкăр... Хамăн марччĕ те ĕнтĕ...

— Пире нимĕн те кирлĕ мар,—тетĕп эпĕ ăна» (22—23 стр.).

Пирĕн артиллеристсем ăна, виçĕ кун çимелскерне, çăкăр параççĕ. Ватă румын «çăкăра илет те ăна кăкăрĕ çумне пăчăртать, вара çавăнтах чĕркуçленсе ларать, илтĕнми сăмахсемпе темĕн мăкăртатса, кĕлтуса пуççапма тытăнать» (25 стр.). Анчах совет офицерĕ ăна çĕклесе тăратать, румын чĕлхипех çынна çын пуççапма кирлĕ марри çинчен каласа парать. Старик тĕлĕнет те, хĕпĕртет те, артиллеристсене пĕтĕм кăмăлтан хăй тарçăра пурăннă хуçа килне вырнаçма сĕнет.

Çак картина вулакан кăмăлне чылай хумхантарать, асра юлать.

Пирĕн дивизион яла пырса кĕрет, анчах унта пĕр чун та çук: пурте сăртсем хушшине тарнă. Дамьян старикпе ун ывăлĕн хĕрачи артиллеристсенчен пĕртте ютшăнмаççĕ. Тепĕр кун ирхине ялтан тарса кайнă халăх килĕсене таврăнать. Вĕсене никам та тĕкĕнмест иккен. Тĕкĕнме çеç мар, совет салтакĕсем вĕсене пур тĕлĕшпе те пулăшаççĕ, ыррăн калаçаççĕ.

Акă Дамьянпа офицер ялтан тарса кайнă пуянăн пӳртне кĕреççĕ. Вĕсем рояль çинче шкатулка кураççĕ. Унта ылтăн сулăсемпе çĕрĕсем тата тĕрлĕ хаклă йышши чулсем. Старик вĕсене офицера сĕнет, анчах офицер нимĕн те илмест, пĕтĕмĕшпех Дамьяна парать.

Степан Шкуруний шофер чыслă та хисеплĕ ĕç тăвать. Вăл хуларан бензин турттарса килнĕ чухне çул çинчех çăмăлланма аптранă хĕрарăма тĕл пулать, ăна пулăшу парать, хăй машини çинче лайăххах килне илсе çитерет. Çак ĕçшĕн ăна тав тума пыраççĕ.

Тата тепĕр тĕслĕх. Батарейăри связист, Ибраев хушаматлă тутар ачи, Дамьянпа пĕрле хуçан пысăк садне курса çӳрет. Ибраев рядовой совет çынни, кунта темĕн чухлĕ çитменлĕх курать. Вăл старике йывăççене хăш вырăна лартмаллине, садри кӳлĕре пулă ĕрчетме май пуррине, кашни йывăç тĕлнех вĕллесем лартса темĕн чухлĕ пыл пухса илме май пуррине, çакă вăл хуçалăхра пысăк тупăш пама пултарнине каласа ăнлантарать.

Совет воинĕсен пархатарлă ĕçне, вĕсем румын халăхне чуралантарма мар, ирĕке кăларма килнине хресченсем кашни утăмрах туйса тăраççĕ, вĕсем Совет çарне, пĕтĕм совет çыннисене кунсеренех ытларах та ытларах юратма пуçлаççĕ, юлашкинчен румынсем совет воинĕсемпе аллаллăн тытăнса гитлерла Германие хирĕç вăрçма тытăнаççĕ, çаксене повеçре ĕненмелле, тĕрĕс çырса кăтартнă. Ку ĕнтĕ çак историллĕ пысăк ĕçсене автор хăй куçĕпе курнинчен те нумай килнĕ.

Повеçре тĕнчери икĕ обществăн (социализм тата капитализм) представителĕсем тĕл пулаççĕ: совет офицерĕсем тата Нью-Йоркпа Париж университечĕсенчен вĕренсе тухнă Грегоре Патрашкану. Мĕнпе уйрăлса тăраççĕ-ха вĕсем пĕр-пĕринчен? Чи малтан, Грегоре хăйне халăхран сӳлте тытма тăрăшать, йывăр ĕçпе пурăнакансем çине йĕрĕнсе пăхать. Совет офицерĕ вырăпа аптранă румына çăкăр парса тăрантарчĕ, çара урисене атăсем тăхăнтартрĕ пулсан, Патрашкану вара çул çинче çăмăлланма аптранă хĕрарăм мĕн тери тилмĕрсе пулăшу ыйтни çине те çаврăнса пăхмасть. Вăл акăлчанпа француз чĕлхисене питĕ хаклать. Çакă уншăн темĕнле пысăк ялала пек туйăнать. Пирĕн лейтенантсенчен пĕри акăлчанла, тепри французла та, румынла та калаçаççĕ, анчах çакă вĕсемшĕн пачах та хăйсене мăнна хумалли йăла мар. Грегоре хăйĕнчен икĕ хут çамрăк Аннета ятлă хитре хĕр патне пырса çӳрет. Анчах вăл ун патне чĕрери таса юратупа мар, ирçĕр шухăшпа çеç пырса каять. Вăл никама та юратма пултараймасть. Аннета совет офицерĕсен ырă кăмăл-туйăмне сиссе илет, унăн кăмăлĕ пĕр лейтенант еннелле çаврăнать, анчах совет çынни ку тĕлĕшпе те таса. Унăн Шупашкарта юратнă хĕрĕ пур, вăл ун умĕнче ĕмĕрлĕхех таса пулма тивĕç. Вăл Аннетăпа юлташла çеç калаçать.

Грегоре хăйĕн профессийĕпе медик. Анчах больницăра ăна ĕç памаççĕ. Вăл хăй профессийĕпе виçĕ çул хушшинче те виçĕ уйăх кăна ĕçленĕ. Патрашкану урăх нимĕнле ĕçе те пĕлмест, çавна пула чечек сутса çӳрет. Малта асăннă Ибраев салтак çарти телефонист çеç мар, комбайнер та, музыкант та, садовод та, сапожник та, пчеловод та. Автор калашле, «хресчен ĕçĕнче вăл курман-пĕлмен ĕç çук та пулас».

Дивизионри письмоносец Васильев та, Новиков радист та хăйсен пĕлĕвĕпе тата пултарулăхĕпе çак икĕ университет пĕтернĕ çынтан нумай çӳлте тăраççĕ.

Çапла вара, Н. Ильбек «Тăвата кун» повеçре уйрăм çынсен уйрăм енĕсене çеç мар, икĕ тĕнчери икĕ тĕрлĕ социаллă условисене кăтартса пама тăрăшать. Капитализм обществинче çынсене аталанма, вĕсен пултарулăхне ӳссе чечекленме нимĕнле условисем те çук, социализм обществинче вара пур условисене те туса панă.

Повеçĕн çитменлĕхĕсене те палăртса хăвармалла.

Повесть малтан пуçласа вĕçне çитиех пĕр тикĕс пымасть. Унăн юлашки пайне автор васкасарах çырнă пулас. Ку çеç те мар, повесть вĕçĕ пĕр-пĕр наставлени, кама та пулин хушса, тӳрремĕнех вĕрентсе каланă пек пулса тухнă: автор совет çыннисен ĕç-хĕлне, вĕсен таса шухăшкăмăлне, пысăк юратăвне ытларах хăй сăмахĕпе каласа парать.

Повеçре сайра хутран тĕрĕс каламан шухăшсем те тĕл пулаççĕ. «Румынире, таçта шала кĕрсе кайрăмăр. Халăх пур çĕрте те пĕр пек пулсассăн та, кунта ют çĕршыв çыннисем-ха. Вĕсен хăйсен ĕçĕхĕлĕ, хăйсен терчĕ, нуши, телейĕ, — кам мĕнле майпа ăс çитерет, хайлать, çавăн пек пурăнать. **Вĕсен çумĕнче пирĕн ĕç çук** (курсив манăн.—Г. П.), хамăра кăтартма килмен эпир кунта пăшал тытса, хаяр тăшман ертсе çитерчĕ, тăшманпа çапăçатпăр та. Çавăнпа **хамăр çине тинкерсе пăхакан куçсене вĕсем тĕлĕнсе пăхаççĕ-и, хапсăнса-и, кураймасăр йышăнаççĕ-и пире, тăванла-и — пурпĕрех асăрхасах каймастпăр**» (21 стр.).

«Вĕсен çумĕнче пирĕн ĕç çук» тени тĕрĕс пулать-ши вара? Ку, пирĕн шутпа, повеçĕн пĕтĕм шухăшне хирĕçлет. Пирĕн совет государстви, совет çыннисем демократиллĕ çĕршывсенче пурăнакан халăхсене кулленех пур майсемпе те пулăшса тăраççĕ. Вĕсем çав пулăшăва пула кĕске хушăрах историллĕ пысăк çитĕнӳсем турĕç.

Повеçре пĕтĕмĕшпе илсен, шăпах çав туслăх, çав пулăшу мĕнле пуçланса кайни çинчен каланă та.

«Кураймасăр йышăнаççĕ-и пире, тăванла-и, — пурпĕрех асăрхасах каймастпăр» тени те тĕрĕс мар ĕнтĕ. Кураймасăр е тăванла йышăннине çар çынни çеç мар, кашни çынăнах асăрхамалла. Асăрхамалла çеç те мар, унтан кирлĕ выводсем тумалла.

Повеçре Вершков хушаматлă шурă эмигранта кăтартнă. Пирĕн шутпа, Вершкова повеçре пысăк вырăн пани, вăл хăйне ытла та ирĕклĕ тыткалани, унпа кирлĕ-кирлĕ мар ялаласем çинчен нумайччен калаçса ларни те вырăнлă мар. Автор унпа «калаçнă чухне сăмахăмсене сивĕрех каларăм. Ĕнтĕ манăн унпа хĕр çураçса хĕр илмелле мар-ха» (64 стр.) тет пулин те, унпа пĕрлех эрех ĕçни, юлашкинчен Вершков пĕр йĕрсĕрех тата ирĕккĕнех таçта кайса çухални вулакана тĕлĕнтерет.

«Тăвата кун» повеçĕн хăшпĕр вырăнĕсене якатса тухас пулать, вара вăл чăваш литературинчи лайăх произведенисен шутне кĕме пултарĕ.

Ген. ПЛАСКИН.

*) Н. ИЛЬБЕК. «Тăвата кун», повесть, «Тăван Атăл» альманах, 1953 ç. № 1 (46).

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕнче

КОПЕНГАГЕН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕн ĕнерхи каçхи ларăвĕнче Эжени Коттон госпожа доклачĕ тăрăх прениcем пулнă.

Ларура çаксем тухса каланă: Луисе Гонзалес (Коста-Рика), Одиль Бергманс (Бельги), Берихэм (США), Аните Ривэс (Республикăлла Испани), Норджен (Монголи), Канделария Родригес (Куба), Торви (Финлянди), Абассия (Алжир), Кампистру (Уругвай), Элэд госпожа (Венгри), Эдельман госпожа (Аргентина), Эшенбергер госпожа (Австри).

Ларура конгрес ячĕпе тĕрлĕ çĕршывсенчи хĕрарăмсен организацийĕсенчен килнĕ саламсене вуласа панă.

КОПЕНГАГЕНРА СОВЕТ КИНОФИЛЬМĔСЕН ФЕСТИВАЛĔ ПУÇЛАННĂ

КОПЕНГАГЕН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Копенгагенра «Фильммузеет» кинозалĕнче совет кинофильмĕсен фестивалĕ пуçланнă. Фестиваль пĕр уйăха пырать. Çав вăхăт хушшинче 26 кинофильм кăтартаççĕ.

Лидице ялĕнчи хӳрлăхлă митинг

ПРАГА, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Лидице ялĕнче, ăна гитлерла захватчиксем çĕмĕрсе тăкнăранпа 11 çул тултарнине палăртса, хурлăхлă митинг иртнĕ.

Митингра миршĕн тăракансен Чехословаки комитечĕн секретарĕ В. Лоренц, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн представителĕсем, Кладно çĕр кăмрăк бассейнĕнчи горняксем тата ыттисем те пулнă.

Ĕççыннисен, представителĕсем фашистсем асаплантарса вĕлернĕ паттăрсен памятникĕ умне чечек кăшăлĕсем хунă.

Египетра сывлăха сыхлас ĕçе япăх йĕркеленĕ

КАИР, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). «Аль-Мысри» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 7-мĕшĕнче Египет сывлăх министрĕ Тарраф пресс-конференцире сăмах тухса каланă. Вăл хальхи вăхăтра Египетра 12—14 миллион çын таран вар-хырăм чирĕпе чирлени çинчен пĕлтернĕ. 559 пин çын туберкулезпа чирлет. Туберкулез чирĕпе кашни çул 55 пин çын вилет.

Тарраф çакăнпа пĕрлех тата çапла пĕлтернĕ: сывлăха сыхлас ĕç валли государство бюджетĕнчен пурĕ те 4 процент кăна укçа уйăрса параççĕ. Çĕршывра туберкулез чирĕпе чирленĕ çынсем валли 77 пин койка кирлĕ, хальхи вăхăтра пурĕ те 4 пин койка кăна шутланать.

КЕНИРЕ АНГЛИ ВЛАÇĔСЕМ ИРТĔХЕÇÇĔ

ЛОНДОН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Найробăран (Кени) пĕлтернĕ тăрăх, паян Кени влаçĕсем Кенири негрсен союзне — негрсен пĕртен-пĕр политикăлла организацине—ĕçлесе тăма чарнă. Çак союзра 100 пин çын членра тăрать. Губернатор сул чиновникĕсене союзăн пĕтĕм пурлăхне туртса илме хушнă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче пур фронтсенче те разведка тăвакан чаçсем çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй артиллерийĕ паян тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

Корея рабочийĕсен паттăр ĕçĕ

ПХЕНЬЯН, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи рабочисем ĕçре пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Корейăри тĕп телеграф агентстви паллă бурильщик Ĕç Геройĕ Чжо Ду Сир тунă çитĕнӳ çинчен пĕлтерет. Малта пыракансен ĕç меслечĕпе усă курса тата виçĕ агрегатпа ĕçлесе, Чжо Ду Сир майăн 8-мĕшĕнче тимĕр тăпри кăлармалли 1953 çулхи плана тултарнă. Унăн меслечĕпе ĕçлесе, Ĕçлĕх партийĕн членĕсем Чжан Хын Бом тата Чжон До Хэб тимĕр тăпри кăлармалли çулталăкри плана майăн 21-мĕшĕнче тултарнă.

Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем

ПЕКИН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтернĕ:

Паян кăнтăрла иртсен 2 сехетра Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусенче икĕ енĕн делегацийĕсем те тыткăнри çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен Паньмыньчжоньра официальнăй йĕркепе килĕшӳ туса алă пуснă. Çапла ĕнтĕ часах Корейăра перемири тăваççĕ, çавна пĕтĕм тĕнче кĕтсе тăрать. Перемири тăвассипе çыхăнса тăракан административла ĕçсене кĕске срокра йĕркелесе çитермелле тăвас шутпа, делегацисем хупă ларусем ирттереççĕ.

Çитес лару июнĕн 9-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре пуçланмалла.

Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем пирки

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «ООН командованийĕн» представителĕ Паньмыньчжоньра: ООН командованийĕ тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан ыйту пирки Корейăпа Китай енĕпе калаçса татăлнă, Паньмыньчжоньра июнĕн 8-мĕшĕнче кăнтăрла икĕ енĕ те килĕшӳ условийĕсем çине алă пуснă, тесе пĕлтернĕ. Килĕшӳ çине хупă ларура алă пуснă, анчах килĕшӳ условийĕсене икĕ енĕ те пытарса тăмасть, вĕсем çинчен протоколра çырса кăтартаççĕ.

«Çакна шута илес пулать,—тенĕ представитель,—ку вăл перемири çинчен килĕшӳ туни пулмасть-ха. Кунта сăмах тыткăнри çар çыннисем çинчен кăна пырать. Калаçусем иртнерипе татса памалли административла ытти ыйтусем те пур-ха. Делегацисен пĕрлехи çитес ларăвĕ июнĕн 9-мĕшĕнче 11 сехет те 00 минутра пулать».

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Сеултан пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕсем тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан ыйтăва йĕркелени çинчен пĕлтернине «савăнăçлăн кăшкăрса» йышăннă. Салтаксем пурте чи малтан çапла ыйтаççĕ: «Эпĕ хăçан киле кайма пултарăп-ши?»

Кăнтăр Корейăри выçлăх

ПХЕНЬЯН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăри тĕп телеграф агентстви Кăнтăр Корея халăхĕ выçă пурăннине кăтартакан информаци парать. Кăнтăр Корейăри агентствăн пĕр корреспонденчĕ Пусанран пĕлтернĕ тăрăх, «Пусана выçăпа аптракан хресченсем куллен пырса тăраççĕ. Кашни кун Пусанра кил-çуртсăр, выçă çынсем 2—3 пин таран урамсенче çĕр каçаççĕ. Пусанра выçă ларакан ачасен шучĕ 10 пине çитет».

Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Кăнтăр Корейăри хаçатсем юлашки вăхăтра Кăнтăр Корейăри халăх хушшинче выçă ларнă пирки çакăнса е ытти майпа вилекенсен шучĕ нумайланса пыни çинчен çыраççĕ.

Бенгалире тата Ассамра выçлăх пуçланнă

КАРАЧИ, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). «Имроз» хаçат Калькуттăран пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвелтухăç Бенгалире (Инди), Хĕвеланăç Бенгалире (Пакистан) тата Индири Ассам штатĕнче халăх выçă ларать.

Ассамри чылай районсенче нимĕнле хакпа та рис тупса илме çук. Халăх курăк тата йывăç çулçисем çисе пурăнать. Хăшпĕр çемьесем 15 кун хушши ĕнтĕ апат курмаççĕ. Выçăпа вилекенсем те сахал мар. Пиншер çынсем урамсенче ыйткаласа çӳреççĕ.

Хăшпĕр районсенче сутлăх рис та пур, анчах та вăл ытла та хаклă пирки ăна ĕççыннисем, уйрăмах ĕççĕр тăрса юлнă çынсем, илме пултараймаççĕ.

Хĕвеланăç Германири çамрăксем ĕç тупаймаççĕ

БЕРЛИН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). «Фрейес фольк» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, халĕ Хĕвеланăç Германире ĕççĕр тăрса юлнă çамрăксен хисепĕ 800 пин çынна çитет. 300 пин çынна яхăн çулсем тăрăх вырăнтан вырăна куçса çӳреççĕ, вĕсен кĕперсен айĕнче тата поезд кĕтсе лармалли залсенче çĕр каçма тивет. 190 пин çынна яхăн землянкăсемпе лагерьсенче пурăнаççĕ.

-Кĕскен-

☆ **Çĕнĕ специальность туянчĕç.** Горькири вĕренӳ комбиначĕн Шупашкарти филиалĕнчен промышленность предприятийĕсенче ĕçлеме бухгалтерсем вĕренсе тухрĕç. Квалификаци комиссийĕ 66 çынна «промпредприяти бухгалтерĕ» ятне пачĕ. Вĕсенчен 16 çын Аслă Отечественнăй вăрçă инвалиĕсем. Çавăн пекех колхоз счетоводĕсен квалификацине ӳстермелли икĕ уйăхлăх курсран вуншар çын вĕренсе тухрĕç. **А. СУДАКОВ.**

☆ **Çĕнĕ библиотека.** Октябрьски районĕнчи культурăпа сутĕç учрежденийĕсен хисепĕ çултан-çул ӳссе пырать. Нумаях пулмасть Ленин ячĕпе тăракан колхозра çĕнĕ библиотека уçăлчĕ. Халĕ районта 12 клуб, 13 вулав çурчĕ, 7 библиотека тата культура çурчĕ ĕçлет. Кăçал ялсенче тата виçĕ библиотека уçăлмалла. **В. ТРОФИМОВ.**

☆ **Çĕрпӳри ялхуçалăх техникумĕнче.** Кунта вĕренекенсем техникум общежитин картишĕнче спорт площадки турĕç.

Площадкăра волейболла выляма, ăмăртмалла сикме, чушкăлла выляма тата ытти спорт ăмăртăвĕсене иртерме пулать. **П. АЛЕКСЕЕВ.**

☆ **Саман кирпĕчрен—витесем.** Красноармейски районĕнчи «Волга» ялхуçалăх артелĕн членĕсем строительство ĕçне чылай вăйлатрĕç. Строительство ĕçĕсене уйрăм бригада тăвать, унта 40 çын.

Бригада пĕлтĕр 15 пин ытла саман кирпĕч çапнă. Саман кирпĕчрен гараж, подвал, хурсене усрама пысăк вите тата ытти çуртсем те туса лартнă.

Кăçал 20 пин кирпĕч çапма палăртнă. Саман кирпĕчрен чăх-чĕпĕ пăру витисем тата пушар дружини çуртне тума пăхнă. Халĕ строительство ĕçĕ сарăлса пырать. **А. ИВАНОВ.**

ТОРФ КĂЛАРАÇÇĔ

СОВЕТСКИ. Райтоп кăçал Кивтинкеш улăхĕнче торф кăларма тытăнчĕ.

1953 çулта пурĕ 1.000 тонна торф кăларса хатерлеме палăртнă. Торф кăларнă çĕрте 50 çынна яхăн ĕçлет. Халĕ канавсем чавас тĕлĕшпе хĕрӳллĕ ĕç пырать. **А. ХАРИТОНОВ.**

Тӳрлетни

«Коммунизм ялавĕ» хаçатăн июнĕн 5-мĕшĕнче тухнă 108-мĕш номерĕнче 4-мĕш страницăра А. Морсков юлташăн виççĕмĕш ыйтăвĕ çине панă ответ йăнăш пулнă. 4-мĕш колонкăра аялтан виççĕмĕш абзаца çапла вуламалла:

Колхозник килĕн тĕп хуçи колхозпа çыхăнман производствăра ĕçлет, унăн арăмĕ колхозра пурăнать тата çав колхозăн членĕнче тăрать пулсан, вăл ĕçкунĕсен минимумне пурнăçласа пырать пулсан кăна кил вырăнĕпе усă курма пултарать. Колхозница ĕçкунĕсен минимумне кăкăр ачи пур пирки е ытти хăйĕнчен килмен сăлтава пула тултарайман пулсан, унăн кил вырăнне çийĕнчех татса илмелле мар. Ку ыйтăва колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче лартса тĕплĕн сӳтсе явмалла. Колхозница ĕçкунĕсен минимумне хăйĕнчен килмен сăлтавпа тултарманнине колхозниксем шута илме тивĕç.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КИНО

«РОДИНА»—июнĕн 10-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче **«Киносборник № 37»** (сборникре—**«Чук и Гек»** тата **«Красный лист»**); каçхи сеанссенче—Венгрире ӳкернĕ çĕнĕ фильм **«Буря»**.

Çамрăк мичуринецсем

ЭЛЕК. Мăн Выльăри çичĕ çул вĕренмелли шкулта çамрăк мичуринецсен кружокĕ ĕçлет. Ăна опытлă биолог Е. И. Иванова ертсе пырать.

Çуллахи каникул кунĕсем çитрĕç. V-мĕш «А» класра вĕренекенсем халĕ сăнавлă ĕçсем тăваççĕ. Вĕсене биолог тĕрлĕрен опытсем тутарать, çав вăхăтрах ăнлантарса парать.

V-мĕш класа вĕренех тĕрлĕ сорт помидорсем ешернине курма пулать. Упах çĕрулми çеçки çине помидор çеçкине сыпнă, çиелтен кĕленче банкăпа хупланă. Кунта V—VI-мĕш классенче вĕренекенсем сăнавсем тăваççĕ.

Пушă вăхăтра ачасем шкулăн сăнавлă участокĕнче ĕçлеççĕ. Аслă пионервожатăй Ю. Никитина пионерсене ĕçре вĕрентсе пырать.

А. МАЙОРОВ.

РСФСР Ялхуçалăх хатĕрлев министерствин

СĔНТĔРВĂРРИНЧИ ЯЛХУÇАЛĂХ ТЕХНИКУМĔ

çĕр йĕркелекенсен, гидростанцисем тăвакансен 4 çул вĕренмелли отделенисен тата 2 çул вĕренмелли гидромелиораци отделенийĕн 1-мĕш курсĕсене

ВĔРЕНМЕ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ

1. Гидромелиораци отделенийĕ — гидромелиоратор-техниксем вĕрентсе кăларать.

2. Çĕр йĕркелекенсен отделенийĕ—çĕр йĕркелекен техниксем вĕрентсе кăларать.

3. Гидроэлектростанцисем тăвакансен отделенийĕ — гидроэлектростанцисем тăвакан техниксем вĕрентсе кăларать.

4 çул вĕренмелли отделенисенчи пĕрремĕш курса çичĕ çултан кая мар вĕреннĕ тата экзаменсем панă, 14 çултан пуçласа 30 çултан иртмен граждансене илеççĕ.

2 çул вĕренмелли гидромелиораци отделенийĕн пĕрремĕш курсне вăтам шкулăн X-мĕш класĕнчен тата ытти специальнăй вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă, 30 çултан иртмен пур граждансене те экзаменсăрах вĕренме илеççĕ.

Техникумри 4 çул вĕренмелли отделенисенчи пĕрремĕш курссене вĕренме кĕрекенсем çак предметсемпе экзамен тытаççĕ: а) СССР Конституцийĕ (сăмахпа каласа); б) вырăс чĕлхипе литература вулани (сăмахпа каласа тата диктант çырса); в) математика (сăмахпа каласа тата çырса).

1952 тата 1953 çулсенче çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчен мухтав грамотипе вĕренсе тухнă çамрăксене (отличниксене) вĕренме кĕнĕ чухнехи экзаменсенчен хăтараççĕ.

Вĕренме кĕмелли экзаменсем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 20-мĕшĕччен пулаççĕ.

Заявленисене 1953 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 31-мĕшĕччен илеççĕ. Вĕсене техникум директорĕ ячĕпе çак адреспа ямалла: Чăваш АССР-ĕ, Сĕнтĕрвăрри хули, ялхуçалăх техникумĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсем пулмалла: а) шкултан вĕренсе тухнине кăтартакан свидетельство е аттестат (тĕп документ), б) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство (тĕп документ), в) автобиографи, г) виçĕ фотокарточка (çара пуçăн ӳкерни, 3×4 сантиметр пысăкăш), д) сывлăх çинчен тата техникума вĕренме кĕме чаракан чирсем çукки çинчен калакан справкăсем, е) çар учетĕнче тăракансен — çар билечĕ е çар учетĕнче тăнни çинчен свидетельство (пĕрле илсе пымалла), ж) ăçта пурăннине кăтартакан справка.

Вĕренме илнисене пурне те хăш курсра вĕреннине кура 140 тенкĕрен пуçласа 250 тенкĕ таран стипенди тӳлеççĕ. Отличниксене пысăкрах стипенди параççĕ.

Хватер тупайман вĕренекенсене общежитие вырнаçтараççĕ.

Занятисем 1953 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

ДИРЕКЦИ.

Государствăн Чăваш педагогика институчĕ

1-мĕш курса çĕнĕрен вĕренме илесси çинчен

ПĔЛТЕРЕТ

Институт вăтам тата çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче истори, вырăс чĕлхи, чăваш чĕлхи, акăлчан чĕлхи тата нимĕç чĕлхи, физикăпа математика тата биологипе хими вĕрентекен преподавательсем хатĕрлет.

Института вăтам шкултан вĕренсе тухнă, 17 çултан пуçласа 35 çулти, педагогика институтне кĕмелли пур экзаменсене те ăнăçлă тытнă пур граждансене те вĕренме илеççĕ.

Института кĕме ыйтса çырнă заявленисене июнĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 31-мĕшĕччен илеççĕ.

Заявленире хăш факультета кĕрсе мĕнле специальность илме шутлани çинчен кăтартса çырмалла. Заявленисене институт директорĕ ячĕпе çак документсемпе пĕрле ямалла:

а) автобиографи: б) аттестат зрелости (тĕп документ); в) паспорт (пĕрле илсе пымалла); г) виçĕ фотокарточка (çара пуçăн ӳкерни, 3×4 сантиметр пысăкăш); д) çар билечĕ (çар учетĕнче тăракансем валли) е çар учетне илни çинчен пĕлтерекен свидетельство.

Вĕренме кĕмелли экзаменсем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен пулаççĕ.

Кама вĕренме илессине августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшĕччен татса параççĕ. Вĕренме кĕмелли экзаменсене «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе панă тата вăтам шкултан ылтăн е кĕмĕл медальсем илсе вĕренсе тухнă студентсене стипенди параççĕ.

Ыйтса пĕлмеллисем пулсан, çак адреспа ыйтса пĕлмелле: **Чăваш АССР-ĕ, Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, 34-мĕш номерлĕ çурт. Педагогика институчĕ.**

ИНСТИТУТ ДИРЕКЦИЙĔ.

Кизел çĕр кăмрăк бассейнĕнчи Государство драма театрĕн

ГАСТРОЛĔСЕМ

Гастроль пуçланнă кун—июнĕн 19-мĕшĕнче А. М. Горький çырнă драма **«Старик»**.

Июнĕн 20-мĕшĕнче—**«Олеся»** (А Куприн повеçĕ тăрăх).

Июнĕн 21-мĕшĕнче—кăнтăрла **«Королевство кривых зеркал»** (А. Губаревпа А. Ускин); каçхине **«Олеся»**.

Билетсем малтанах сутаççĕ: театр кассинче кăнтăрла иртсен 4 сехетрен пуçласа; универмагра — ирхине 11 сехетрен пуçласа каçхине 8 сехетчен.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01408 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.